24-64

№ Хĕрарăм кĕнеки 1

# ПУШ УЙАХĔН 8-МĔШ КУНĔ.

Хуçайства йĕркисем улшăнса пынă май-па хĕрарăм пурăнăçĕ улшăнса пыни.

Кулђук аппа. Улђуна.

ЂĂВАШ ОПЛĂÇĔНЂИ КĔНЕКЕ КĂЛАРАКАН УЙРĂМ.
Шупашкар. 1925.

Хӗрарӑм кӗнеки № 1

# ПУШ УЙӐХӖН 8-МӖШ КУНӖ.

Хуҫайства йӗркисем улшӑнса пынӑ май-па хӗрарӑм пурӑнӑҫӗ улшӑнса пыни.

Кулђук аппа. Улђуна.

ђӐВАШ ОПЛӐҪӖНђИ КӖНЕКЕ КӐЛАРАКАН УИРӐМ.
Шупашкар 1924.

Чув. Областлит. № 692. Печат. 3,000 экз.

г. Чебоксары, Типография Чувашиздата.

## Пуш уйăхĕн 8-мĕш кунĕ

### Пĕтĕм тĕнҫери ĕç хĕрарăмĕн праçникĕ.

### Праçник историйĕ.

Çак праçнике 1909-мĕш çулта Америкри хĕрарăм согсиалиссем пуçарса йанă. 1910 ç. пĕтĕм тĕнҫери хĕрарăм согсиалиссем Тани патшалăхĕнҫи Коппенхакĕн хулине 2-мĕш конферентсине пухăнна. Çав конферентсинҫе Клара Цеткинĕ каланă тăрăх пуш уйăхăн 8-мĕш кунне пĕтĕм тĕнҫери ĕç хĕрарĕмĕсен праçникĕ тумалла тунă.

1911 ç. ку праçнике ĕçхĕрарăмсем хăш-хăш патшалăхра анҫах тунă. Ку çул пуринҫен ытла праçник Керманинҫе лайăх иртнĕ. Австри патшалăхĕнҫе пухха пуçтарăннă хĕрарăмсене политсисем хăвала хăвала йанă. Пуйансен вăлаçĕ ĕç хĕрарăмсен праçникне йуртман.

1912 ç. тĕнҫери пур пысăк патшалăхсенҫе те ĕç хĕрарăмсем хăйсен праçникне лайăх ҫысланă.

Раççей патшалăхĕнҫи ĕç хĕрарăмĕсем çак праçнике ҫыслама 1913 ç. пуçланă. 1914 ç. ку праçнике иртерме хатĕрленекен хĕрарăмсене (Самойловăпа Николайăвăна) тĕрмене питĕрсе ларнтă. 1915 çулпа 1916 ç. патша вăрçи пирки çак праçнике иртерме май пулман. 1917 ç. (Питĕр) Ленинкрат хулинҫи, вăрçă вăхăтĕнҫе наҫарланса, выççа çитнĕ хĕрарăмсем, салтак арăмĕсем пуш уйахĕн 8 мĕш кунне урама пухăнса тухса: пирĕн выçă аҫасене çăкăр, парăр! упăшкасене окопран киле йарăр! тенĕ. Çав кунран кайран патша хăй вырăнҫен тухса ӳкесси пит паллă пулнă. Раççейре Совет влаçĕ пулнăранпа ĕç хĕрарăмсен хăйсен праçникне кашни çулах ҫаплă иртереççĕ.

Пирĕн ҫăваш хĕрарăмĕсем, ку праçнике пухăнса, ҫи малтан 1921 ç. иртерҫĕç. Ку çул пуш уйăхĕн 8-мĕш кунĕнҫе парттире тăман хĕрарăмсен оплăçри 1-мĕш конферентси уçăлҫĕ.

Конферентси оплăç тĕп хулинҫе Шупашкарта, ҫăваш тĕп театтăрĕнҫе кăнтăр иртсен 4 сехетрен уçăлҫĕ. Конферентсине 60 çулхи кинемейсем те, йашăрах инкесем те, çамрăк хĕрсем те пухăвнă, пĕр 200 çынва йахăн. Хушăран вырăс йалĕсенҫен килнĕ майрасем

те пур. Ђăваш хĕрарăмĕсем ушкăнăн ушкăнăн Ђăваш Тĕп театтăрне утса пынине кура вырăс майрисем хулипех пухăннă. Хĕрарăм театтăр туллийех пулђĕ. Оплăçри хĕрарăм пайĕ пуçлăхĕ: пайан пуш уйăхĕн 8-мĕш кунне пĕтĕм тĕнђери ĕç хĕрармсем хăйсемпе пĕр шухăшпа пыракансем мĕн ђухлĕ иккенне сăнаççĕ. Епир ђăваш хреçђен хĕрарăмĕсем, ĕмĕр тăрăшса çĕр ђавалаcа пурăнакансем, çав тĕнђери ĕç хĕрарăмсене йерсе вĕсемпе пĕрле праçник тавас тесе пухăнтăмăр, терĕ те, коферентси уçрĕ. Мусăккă инттернатсионал йурларĕ. Праçник йађĕпе оплăçри тĕп уђрештенисем, Хĕрлĕçар, çамрăксен оркаписатсисем хĕрарăм конферентсине салам каларĕç. Пуш уйăхăн 8-мĕш кунĕ çинђен каласа пĕтерсен, конферентси хăй преçитиумне Мускава виçĕ телекрам йама хушрĕ. Пĕрне тĕп хĕрарăм пăйне: пире тĕттĕм ђăваш хĕрарăмне, тĕрĕс çул çине тухма вĕрентсе пынăшăн тавтуса, тепĕрне анђах уçăлнă Р. К. П. сйесне, йулашкине Коминтерĕ. Телекрамсене вуланă хыççăн мусăк Инттернационал йурларе хĕрарăмсем ал çупрĕç. Пĕр ватăрах кинемей хуллен макăрса ларат. Мĕншĕн мак-

ратăн? терĕм.—Пит лайăхран, ђаплăран кăмăлăм çемçелсе кайрĕ, ђăтаймарăм... тет, сасанĕпе куçне йăваш шăлса илет, хăй йăл кулаҭ: Ех, çакна курмасăрах ватăлнă вĕт! тет.

* * *

Пуш уйăхĕн 8-мĕш кунне ĕç хĕрарĕмĕсем мĕншĕн пит ђыслаççĕ?

Вăл куна ђыслакан хĕрарăмсен шухăшсем: Коминтерн йертсе пыракан çул çине тухса, ун йалав айне тăрса пĕтĕм тĕнђери кăпитталиссене пĕтерме тарăшмалли шухăш. Вăлаçа пуйансенђен туртса илсе пролеттари аллине памалла. Пролеттари револђутсине тĕреклĕлентерсе пымалли ĕç.

Пирĕн ђăваш ĕç хĕрарăмĕн те халăха йерес тесе тăрăшмалла. Октапăр револђутси пире халăхпа танлаштарђĕ. Кайа йулса мĕскĕнленсе ырас мар тесен, мĕн пур вăйпа çĕнĕ йерке пурăнăçне ăнланмалла. Коминтерăн йалавне çĕклесе вăл хушнă ĕç сене тумалла. Ăнланма çăмăлтарах пултăр тесе, пит вĕренмелле. вĕренмен çынна пит ђас улгалаççĕ.

Пролеттари револђутсине тума вĕрентекен В. И. Ленин хĕрарăмсем çинђен ак çапла калана:

Пролеттари тунӑ революци анҫах хӗрарӑма ирӗкке кӑларӗ, вӑл анҫах хӗрарӑмӑн ӗлӗкхи хӗсӗк пурнӑҫне пӗтерсе, халӑхпа танлаштарӗ тенӗ.

Ҫӑн ҫӑнах хӗрарӑма пулӑшас тесен, сӑмахпа анҫах мар, ҫасрах хӗрарӑмсене пулӑшмалли: аҫапӑҫа ҫурҫӗсем, шкулсем, столовӑйсем, кӗпе ҫумалли (прачешнисем) ҫуртсем уҫса памалла, тенӗ. Ҫулла тыр вырма кайнӑ вӑхӑтра тӑлӑх аҫасене, тӑлӑх арӑм аҫисем валли те пулин—аҫасем усрамалли ҫуртсем уҫмалла.

Халӗ пирӗн хушӑра Ленин ҫук—вӑл вилнӗ. Вӑл вилнӗ хыҫҫӑн рапоҫисемпе хресҫенсем нумай ҫӗрте ӑна асӑнмалӑх ҫуртсем, сӑнсем, ун кӗлеткине т. ыт. тӑва тӑва лартнӑ. В. И. Ленин арӑмӗ Н. К. Крупскайа калать: Влатимӗр Илиҫа пит пахалас теттӗр пулсан, ун йаҫӗпе аҫасем валли ҫуртсем, шкулсем уҫӑр; ҫавӑ ҫаплӑ пахалани пулӗ тет. В. И. Ленин хӑй ӗмӗр тӑрӑшшӗпех хисепсӗрте, мӗскӗнре пурӑнакан ҫынсемпӗн тӑрӑшнӑ. Вӗсене хисепсӗре кӑларакансенҫен: у л п у т-х у ҫ а с е н ҫ е н, патшасен аллисенҫен йепле хӑтӑлмаллине вӗрентсе пынӑ. Хӑй ӗмӗ-

рӗнҫе ҫапла Раҫҫей патшалӑхӗнҫи пролеттарисене ирӗкке кӑларса хӑварнӑ. Халӗ вӑл пирӗн хушӑра ҫук, анҫах унӑн ӗҫӗ пулса пыраӗ. Ун шухӑшне, ӗмӗтне, ӗҫне комунисла партти вӑл хушнӑ пек туса пыраӗ. Компарттинҫе темиҫе пин ҫын тӑраӗ, вӗсем пур те Ленин хушнӑ пек ӗҫлесе пыраҫҫӗ.

Ленин вилсен, хапрӑкпа савӑтри ӗҫлекенсем ҫав парттийе хӑйсем хушшинҫен темҫухлӗ лайӑх, шанҫӑклӑ, пролеттарисемпӗн тӑракан ҫынсене суйла суйла йаҫӗҫ. Вара партти тата вӑйланса кайрӗ.

Ҫак пӗтӗм тӗнҫери ӗҫ хӗрӑрӑмӗн праҫник кувӗ пирӗн тӗттӗм ҫӑваш хӗрарӑмсен В. И. Ленин вӗрентнине астуса вӑл вӗрентвӗ тӑрӑх пурӑнма тӑрӑшмалла, аҫасене вӑл каланӑ пек вӗрентсе ӳстермелле.

Совет влаҫне тума пуҫланӑ ҫух В. И. Ленин каланӑ: Ҫак ӗҫе епӗр (совет влаҫне) мӗлйун, мӗлйун ӗҫ хӗрарӑмӗпе хреҫҫен хӗрарамӗсем тӑрӑшса пӗрле ӗҫлесен анҫах туса пӗтерӗпӗр, тенӗ.

Тӗнҫипе револуутси йеррипен сарӑлса пыраӗ. Вӑл револуутсин йӑвви епӗр пурӑнакан патшалӑх С. С. С. Р.

Вăл йăвана ҫирĕплетсе тăмалла. Пуринҗен малтан епĕр унта пурăнакансем тăрăшмалла. Кашни ҫул, ҫак пуш уйăхĕн 8-мĕш кунĕ: килес ҫултакăн хушшинҗе хамăр мĕн ĕҫлессе килшÿллесе хумалла. В. И. Ленин вĕрентнĕ тăрăх пĕрре тытăннă ĕҫе туса пĕтермелле. Ĕҫĕ пĕҗĕккĕ пулсан та тĕплĕ пултăр.

Пуш уйăхĕн 8-мĕш куннĕ—тĕнҗипе хисепе кĕтĕр!

Пролеттари револҗутси тĕнҗипе җаплăлантăр.

Коминтерн сывă пултăр!

**Алҗ ӱк.**

**Хуҫайствӑ йӗркисем улӑшӑнса пынӑ майпа хӗрарӑм пурнӑҫӗ улӑшӑнса пыни.**

Хӗрарӑм пурнӑҫӗ пурнӑҫи вӑл? — тетпӗр епир ђас ђасах. — Хӗрарӑм егеми вӑл, — теҫҫӗ пирӗн арҫынсем тата. Ҫак сӑмахсенђенех паллӑ ӗнтӗ, хӗрарӑм пуҫӗпе ҫак тӗнђере пурӑнасси питӗ хӗнни. Кил хушшинђе вӑл ку ҫитменнине пур ҫӗрте те ҫитерсе пырасшӑн. хӗрарӑм хӑй йулташӗ арҫӑнпа мӗн пур хавалтан ӗҫлени вӗсене тан тӑратмасӑ. Ђӑнах та, Октӑпӗр револютси хыҫҫӑн хӗрарӑм саккун умӗнђе арҫӑнпа пӗр шутра тӑрат, анђах пурнӑҫра ҫак йапала паллах марха, пирӗн ђӑваш йалӗсенђе вӑл вуҫ те ҫук пекех. Хӗрарӑм ӗлӗк арҫӑн ҫеҫ тӑвакан кирек мӗн ӗҫе тытӑнасшӑн пулсан, кулаҫҫӗ. Хӗрарӑм та ҫав етемех тесен, — хӗрарӑм хӗрарӑмах ӗнтӗ вӑл, теҫҫӗ, темђул ӑслӑ сӑмах каланӑ пек. Апла пулсан, ђӑн та хӗрарӑм ытти етемрен уйрӑм-ши мӗн? Асаттесемпех асапланса пурӑннӑскерӗн унӑн малалла та ним ҫутӑ шанђӑк та ҫук-ши?.

Кирек мĕн йапалана пĕлес тесен те, ăна ăçтан тупăннă, малтан мĕнле пулнă тесе ҫĕптеççĕ. Çавăн пекех пăхас пулаť пирĕн çак ыйтнине те. Хĕрарăм пурнăçĕ пирĕн асаттесем, ват асаттесем вăхăтĕнҫе вĕсем каласа хăварнисем тăрăх та, тĕрлĕ йумах-халап тăрăх шутласан та, халҫхинҫен çăмăлах пулман. Анҫах çакăнпа çитрĕ-ши ĕнтĕ пире, епĕр инҫе кайса нумай пĕлтĕмĕр-ши пĕлес тенĕ ĕçе çутатма? Çук, тейĕпĕр епĕр çакна хирĕç, мĕншĕн тесен, пирĕн асаттесем каласа хăварни вăл етем йăхĕн пуçламăшĕнҫи пурнăçăн çĕрĕмĕш, пинĕмĕш, мĕлйунăмĕш пайне те кăтартаймасť. Çакна епĕр етем йăхĕ пурнăçĕ çинҫен пĕр май ҫĕптесе тăракан ăслăлăх истори каланинҫен çеç пĕлме пултаратпăр. Истори пире калаť: етем йăхĕ, çак вăхăта çитсе кун пек пулаҫҫен, нумай улшăнса тĕрлĕ пурăнăçпа пурăннă, тет.

Ҫăн малтанах, етем тискер кайăк йеверлĕ ҫухнехинҫен пуçласах пăхсан, хĕрарăм пурнăçĕ нумайҫен пĕтĕмпех халҫхинҫен ăрасна пулнине куратпăр. Хăш вăхăтсенҫе темиçе пин çулсем хушшинҫе вăл арçынран кайа мар—унпа тан, унтан маларах тăнă вăхăт

та пулнӑ. Ҫав вӑхӑтри пурнӑҫпа хӗрарӑмӑн хаљхи пурнӑҫне танлаштарса пӑхсан, хаљхи асапсем унӑн ӑҫтан пуҫланса кайни пит аван палӑрса тӑрать. Хӗрарӑм арҫӑнпа тан марри хӗрарӑмӑн вӑй сахалраххишӗн те мар ӑстӑн кайараххишӗн те мар,—пӗтӗмпех вӑл хӗрарӑм йӑхӗ, опђестварӑ мӗнле ӗҫ туса пынинђен килет мӗн.

Ђи малтанхи етемсем, истори пӗлтернипе, хаљхи пек пурӑнман. Вӗсен патшалӑх туса нумайӑн пӗр ҫӗрте ӗҫлесе пурӑнас йӑла пулман. Тискер кайӑк йевӗрлӗскерсем, вӗсем ирӗк ҫӗр ҫинђе унта кунта кӗтӳ, кӗтӳпе ҫӳресе иртернӗ. Мӗн пур шухӑшӗ те вӗсен хӑруша тискер кайӑксен шӑлне лекмесӗр, ӑҫта ухутара кайӑк тытса, ӑҫта йывӑҫ курӑк ҫимӗҫсем шыраса тупса тӑранасси пулнӑ. Пӗр вырӑнта вӗсене ним те ђарса тӑман, вӗсем текех куҫҫа ҫӳрене. Ҫак вӑхӑтра хӗрарӑмпа арҫынӑн ӗҫӗ тӗрлӗ пулман, пур те вӗсем пӗр майлӑ пурӑннӑ. Ҫавӑнпа ӳтстанӗ те хӗрарӑмӑн хаљхи пек арҫынтан уйрӑмах пулман. Аллинђе ађа ҫук ђухне, вӑл арҫынсемпе танах тӗрлӗ тискер кайӑксене хирӗҫ тӑма та, вӗсенђен тарма та, ухутара

та маттур пулнӑ. Ҫапла вӑл вӑхӑтра хӗрарӑмпа арҫӑн пӗр тан пулнӑ. Вӗсем пӗри теприн аллинҫен пӑхса тӑман, пур те хӑйсен раҫҫӗ ирӗкӗнҫе пурӑннӑ. Хӑрушӑ тӑшмантан, тискер кайӑкран, хӑтӑлмалла пулсан, ӑна хирӗҫ вӗсем ушкӑнпа ҫеҫ тӑма пултарнӑ. Ҫакӑн пек пурӑнӑҫ темиҫе пин ҫула пынӑ.

Нумай вӑхӑт иртнӗ, етем йӑхӗн пурнӑҫӗ те улшӑнса пынӑ. Вак кӗтӳвӗн куҫса ҫӳрекен етемсем пурнӑҫ майне аванлатас тӗлӗшпе нумайрахҫӑн ӑрӑвсемпе пурӑнма май тупнӑ. Ку ӑрӑвсем вара, курӑк кашласа ларакан ҫеҫен хирсенҫе пулнӑ пулсан, выҫӑххӗрлӗхе алла йавӑҫтарсан, вӗсенҫен усӑ курма вӗреннӗ, теприсем вӑрман хушшинҫе ҫӳренӗ ҫӗртех уҫланкӑсенҫе тырӑ ҫимӗҫ тума вӗрене пуҫланӑ. Мӗнле майпа тӑрансан та, ҫак етемсем пӗр вырӑна тӗплене пуҫланӑ.

Мӗнле пулнӑ-ши хӗрарӑм пурнӑҫӗ ҫак йӑхсенҫе, пӗрех-ши? Ҫук, ҫапла икӗ тӗрлӗ майпа пурӑнакан халӑх хушшинҫе хӗрарӑм пурнӑҫӗ те пӗтӗмпех расна пулнӑ. Ҫӗр ӗҫлекен ӑрура хӗрарӑм арҫынпа йунашар вырӑн йышӑнса тӑнӑ, хӑш ӗҫре маларах та пулнӑ. Выҫӑх усраса пурнакан йӑхӑн хӗр-

арӑмӗ унҫухнех хӑй ирӗкне ҫухатнӑ, пур йенҫен те арҫынран кайа шутланнӑ. Мӗнле пулнӑха ку йапала?.

Етем кӗтӳпе унта кунта куҫҫа ҫӳренӗ ҫӗртен ҫӗр ӗҫне тӑруках вӗренмен. Етемшӗн йепле курӑк ҫимӗҫ, йепле курӑк усӑллине пӗлсе ҫитиҫен, темҫул вӑхӑт та иртнӗ. Аҫаллӑ арӑмсем, кайӑксене хӑваласа ухутана кайнӑ ҫух, пуринпе пӗрле ҫӳреме пултараймен. Вӗсен ирӗксӗрех пӗр ҫӗре йулса ыттисем таврӑнса килессе кӗтмелле пулнӑ. Хайсем йалан ҫийекен пӗр вырӑнти апат нумайа ҫитмен; аҫасене тӑрахса хӑварас, вӗсемпе ҫӳрес тесен, тискер кайӑкӗсем нумай. Аҫтан та пулин ҫӗнӗ ҫимӗҫ тупасах пулат. Ура айӗнҫе темӗн ҫухлӗ ӳсетӑран пулнӑ, хырӑм выҫҫи хӗрарӑма хӑш хӑш ҫимӗҫ вӑррисем етеме ҫиме йуранине пӗлтернӗ. Вӑл, вӗсене пуҫтарса, аҫине те хӑй шӑлӗпе (малтанхи арман ҫуҫ пек) ватса ҫитернӗ. Пуҫтарнӑ вӑрӑ ҫинӗ ҫух тӑкӑнни те пулнӑ. Тепре ҫух ҫав вырӑна ҫаврӑнса ҫитсен хӗрарӑм тӑкӑнса йулнӑ вӑрӑ шӑтнине асӑрханӑ. Ҫӗре ҫакаласа ҫемҫетнӗ вырӑна ӳкнӗ вӑрӑсем аванрах шӑтса ӳсни те хӑш пӗр ҫух хӗрарӑм

кусӗнҫен пытанайман. Ҫакӑн пек пӗҫҫен хӗрарӑмсем сӑнание пур те пӗлеҫҫӗн пайтах вӑхӑт иртнӗ. Етем йахӗ вӑл вӑхӑтра кайӑксем йевӗрлӗ пулнӑ пирки, хӗрарӑм хӑй сӑнаса пӗлнине ыттисене каласа пӗлтереймен. Анҫах хӗрарӑмсем сӑнанинҫен етемсен тӗрлӗ йӑласем пула пуҫланӑ. Сӑмахран, вӗсен пӗр уйӑх тулнӑ ҫух хӗрарӑмсене хӑварнӑ ҫӗре. темиҫӗ уйӑх пулса иртсен каллах тавӑрӑнмалла йӑла пулнӑ. Ҫавӑн пек хӗрарӑмсем тӑвакан йӑласене пур йӑх та хирӗҫ пыман. мӗншӗн тесен, вӗсем каланӑ пек тумасан, аҫасем ытларах вилнине сӑнанӑ. Ҫапла пӗҫӗккӗнех хӗрарӑм, пӗҫҫен тӑрса йулсан, тӑранма ҫӗре туратлӑ патаксемпе, ҫулсемпе ҫакаласа вӑрӑ акса илме вӗреннӗ. Тепӗр йенҫен вут-ҫуламӗнҫен усӑ курасси те малтан хӗрарӑм сӑнаса пӗлнипе пулнӑ пулмалла. Ҫулсенҫен хӑйне валли тӗрлӗ хатӗр шаккаса тунӑ ҫух, етем вут ҫапса кӑларнӑ. Ҫавӑн пек хӗрарӑмсене аҫипӑҫипе хӑварнӑ ҫух, вӗсене тискер кайӑксенҫен сыхлама вут хурса хӑварнӑ. Тискер ҫӗрте ним пулӑшусӑр йулнӑ хӗрарӑм ку вутта сӳнме паман, ҫапла вӑл ҫак тӗлӗнмелле хӑватран усӑ курма вӗреннӗ.

Унта вăл персе тытнă каҫакан ҫăмне, вĕҫен кайăк тĕкне ĕнтнĕ; тăмран сăвăт пекки тусан, ăна вут ҫинҫе тытса ҫирĕплетнĕ, темиҫе тĕрлĕ усă та курнă.

Аҫисене сыхлама йывăҫ курăкран хӳтлĕх тума пуҫлани те хĕрарăм аллипех пулнă пулмалла. Ҫапла, етем пурнăҫĕ пуҫланнă вăхăтра, хĕрарăм арҫынпа танах пурнăҫа аванлатса малалла йаракан майсем тупнă.

Пĕр тĕпленсе ҫитсен, ҫĕрĕҫне пур йăх пĕле пуҫласан та, тырă акса тăвасси хĕрарăм аллинҫех йулнă, арҫынсем ухутара, ытти йăхсемпе ҫапăҫса вăхăта ирттернĕ. Хĕрарăм ĕҫĕ килте тунăскер куҫ умĕнҫе пулнă, вăл арҫынсен ĕҫĕ ăнман ҫухне шанҫăклă апат пулнă. Ҫакна кура хĕрарăм хăй те ытти ăрăври етемсем хушшинҫе ҫыслă ҫын пулнă.

Тырра вăхăтлă акса илесси, ĕҫ майĕсене аванлатасси хĕрарăм ăсне текех вăратса тăнă; ҫавăнпа та ҫав вăхăтра ăсталăх тĕлĕшĕнҫен вăл арҫынтан кайа мар, малта тăнă. Ҫут ҫанталăка ытларах сăнаса, пур ăру пăхăнса тăракан тĕрлĕ йăласене те хĕрарăм туса пынă. Аҫа туни ăру куҫĕнҫе хĕрарăма хакла

хунӑ: тӗпленсе ҫӗр ӗҫне тытӑнсан, йыш ытларах кирлӗ пулнӑ. туртуллӑ ҫывӑх хурӑнташсем ӗрлӑ арӑмлӑ пурӑннипе аҫасем сахал ҫуралнӑ.

Йепле пурӑннӑ-ши ҫав вӑхӑтрах выҫӑха алла вӗрентсе усраса пурнакан ӑрусем? Хӗрарӑм аҫа тӑваҫҫен ҫеҫ арҫӑнпа пӗрле тискер выҫӑхсене тытма ҫӳренӗ, аҫаллансан хӑйсем тӗпленнӗ ҫӗрте пӗр май пурӑнса тытнӑ выҫӑхсене алла вӗрентсе тӑнӑ. Хӑш ӗҫ йывӑртарах—хирте ирӗкре ҫӳрекен кӗтӳри тискер ӗне-вӑкӑра тытса килесси-и, йе ҫав ӗнесех кайран сума вӗренесси-и? Арҫын тытса килеймесен, хӗрарӑм ӗҫӗнҫен мӗн усси? Хӑш ӗҫе тӑвакан ӑрура ҫысларах пулмалла? Паллах, хӗрарӑм ӗҫӗ ӑрушӑн ҫи кирли мар, ҫавӑнпа хӗрарӑм хакӗ те ӑру куҫӗнҫе ӳкет. Вӑл хӑй ӗссӗн пулсан, ӑрӑвшӑн хаклӑ ҫын мар, арҫын ҫумӗнҫе ӑна пулӑшаканни ҫеҫ. Ҫавӑнпа та вӑл етем тивлетне ҫухатса арҫынсӑр пуҫне хӑйне хӑй ним вырӑнне тӑми пулаҭ. Ахаҫ те, выҫӑх хыҫҫӑн ҫеҫ ҫӳресе. унӑн мӗн пур ӑсӗ тӑнӗ те ҫывӑрса кайнӑ. Ӑрури выҫӑхсем арҫынсем тытнипе, ытти

ӑрусене ҫаратса килнипе нумайланса пынӑ, хӗрарӑм ҫав выҫӑхсене пӑхса тӑракан тарҫӑ вырӑнне ҫеҫ йулнӑ. Тепӗр йенҫен, выҫӑх ҫаратнӑ ҫӗртех хӑйне валли арӑм вӑрласа килес йӑла та пулвӑ. Паллах, таҫтан вӑрласа килнӗ хӗрарӑм йут ҫӗрте ӑрӑвшӑн та, вӑрлаканнишӗн те тарҫӑ пек ҫеҫ курӑннӑ. Анҫах ҫак вӑрлас йӑла ҫӗр ӗҫлекен йӑхсенҫе те пулнӑ та, анҫах унта хӗрарӑм ҫисра тӑнӑ. Вӑл мӗнпӗннине епӗр каларӑмӑр ӗнтӗ: пӗр ҫӗрте вӑл ӑрӑвшӑн ҫи кирлӗ ӗҫсене, арҫынтан йулса мар, хӑй пуҫарса тӑваҭ, тепӗр ҫӗрте унӑн ӗҫӗ ӑрӑвшӑн нимех те мар. Хӗрарӑмӑн икӗ ҫӗрте икӗ тӗрлӗ пурӑнни пӗтӗмпех ҫак сӑлтавра.

Темиҫе пин ҫул егем йӑхӗ ҫавӑн пек ӑрусемпе пурӑнса ирттернӗ. Вӑл вӑхӑтра мӗн пур йапала пӗтӗмпех ӑрун пулнӑ, ӑрури уйрӑм ҫыннӑн хӑйӗн ним те пулман. Анҫах вӑхӑт иртнӗ ҫемӗн, пурнӑҫ пӗҫӗккӗнех улшӑнса пынӑ. Кайрантан кайран ӑру сапаланса кайсан, капни ҫемйе харпӑрхӑй пурӑнма пуҫланӑ. Мӗн ӗҫлесе тупни ӑна хӑйне пулнӑ, ун харпӑрлӑх пулнӑ. Ҫак майпа пурӑнни хӗрарӑм пурнӑҫне пушшех йывӑрлаг-

нӑ, ӑна йӑлтах ҫемйе ҫури тунӑ. Ҫӑнах та, пӑхарха ҫӗр ӗҫлесе пурӑннӑ ӑрусене. Вӗсен тӗп, тӑрантаракан ӗҫӗ ҫӗр ӗҫе ҫухне хӗрарӑм унта аван вырӑнта, анҫах вӑхӑтпа пӗрле пурнӑҫ майӗ улшӑнат. Тӗрлӗрен кирлӗ ӗҫсене вӗренсе пынипе вӗсен тӗрлӗ ӑстасем сиксе тухаҫҫӗ: тӑм савӑҫӗ тӑвакансем, тиртен ҫӗлекен, тӗртекен маҫтӑрсем тата ытгисем те нумай. Ҫӗр ӗҫлекен тунӑ тырпулӑ ҫав ӑстасен таварӗпе улшӑнса тӑнӑ. Ҫӗр ӗҫне тума ытти ӗҫрен вӑй та, вӑхӑт та нумайрах кирлӗ, ҫавӑнпа вӑл ӑсталӑхсенҫен (ремесласенҫен) кайарах шутлана пуҫланӑ. Улӑшгарнӑ ҫух, йалан ах усламӗ ӑстасене ытларах кайнӑ. Тӗрлӗ ремес нумай пӗлекен ӑрусенҫе ҫӗр ӗҫне вӑрҫӑра тытса илнӗ ҫурисене тугарнӑ. Хӗрарӑмсем ӗлӗк ҫӗрӗҫне вӗренсе тунӑшӑн аван шутра пулнӑ пулсан, ҫак ӗҫе тарҫӑсене тивӗҫлӗ теме пуҫласан, мӗнле вырӑнта тӑнӑ-ши вӗсем? Ӗҫӗ хак ҫухатнӑ майӗпе хӗрарӑм та арҫыпа тан шутран тухса, тарҫӑ вырӑнне ҫывхарнӑ. Харпӑрлӑхлӑ ҫемйен пурнӑҫ майӗ ӑна пӗтӗмпех арҫын ҫумне ҫыхса хунӑ. Килҫуртра тулти кал кал ӗҫсене арҫын тунӑ, килҫуртне сых-

лакан, арçын тупнă пуйанлăхне упракан хĕрарăм пулнă. Çапла хăйне хăй хĕрарăм ним вырăнне те тăман, арçын çумĕнҫе çеç йăпшăнса пурăннă.

Вăхăҫĕпе етем пурнăçĕ аталанса малалла кайнă. Темиçе пин çул кайа вăйлă ҫаплă патшалăхсем пулнă. Истори кăтартнă тăрăх епир унти пурнăçа пĕлме пултаратпăр. Акă Крекпе Рим, икĕшĕ те тĕрлĕ ăслăлăх, ăсталăх, суту илӳ, вăрçă ĕçĕ вăйлă пулнипе ҫаплăскерсем пулнă. Унта хĕрарăм мĕнле вырăнта тăнă-ши? Çак патшалăхсенҫе çĕр ĕçне, ытти йăвăр ĕçе пĕтĕмпех ҫурасем ĕçлесе тăнă. Паллах, ҫура арçын-и вăл, хĕрарăм-и, темҫул ĕçлесен те, асап тӳссе çеç пурăннă. пурăнăç ырлăхĕ вĕсемшĕн пулман. Ирĕклĕ пуйан краштăнсем çеç вăрçăпа суту-илӳ ĕçне, патшалăха йĕркелес ĕçе туса тăнă. Вĕсен арăмĕсем килĕсенҫе тарçисене ĕçлеттерсе пуйанлăхпа ырă курса тăнă, анҫах вĕсен ырлăхĕ пĕтĕмпех упăшки кăмăлĕнҫен килнĕ. Çак хĕрарăма арçынпа танлаштарсан, вăл ним вырăнҫе те пулман. Çапла ку ҫаплă патшалăхсенҫе те хĕрарăм ĕçĕ пĕҫиккĕ, çемйене çеç кирлĕ пулнă пирки наҫар вырăнта шутланса тăрать.

Вăхăт иртнĕ, хăватлă патшалăхсем те сапаланнă, етемĕн пурнăçĕ майĕ те улшăнса пынă. Нумай çĕрте çĕре пуйан улпутсем (феодалсем) тытса хреçђенсене ĕçлеттерсе тăнă. Çак майа йапалалла (наттурлă) хуçайствă тенĕ, мĕнпĕн тесен, пурнăçра мĕн кирлине пĕтĕмпех хреçђенсем туса, улпута налук парса тăнă. Хăйсене йулни ытлашши пулсан, хреçђенсем вăл тавара йармăккă пексисенђе ытти кирлĕ таварпа улăштарнă. Çавăн пек улăшу тума йури хуласем те пулнă.

Ун ђухнехи хĕрарăмсен пурнăçне пĕлме çак виçĕ тĕрлĕ пурăнакан пурăнăçа хреçђенпе улпутăн, тата хула çыннин пурнăçне уйрăм пăхар. Хреçђенсем арçынĕ хĕрарăмпех мĕн пур халăхĕпе ĕçленĕ, анђах унтан ђыс курайман. Çĕр хуçи, улпут çеç, ђысра тăнă. Пĕр пек ĕçленипе хĕрарăм хреçђен хуппиинђе арçынпа танрахах тăнă, анђах ытти çĕре тухсан, вăл ниме те тăман. Хăй упăшкисĕр пуçне вăл ним тума та пултарайман.

Улпут арăмĕ, улпуђĕ пĕр май вăрçса, йĕри тавра çаратса çÿренипе, мĕн пур иминиђи ĕç йĕркине майласа тăнă. Каларăмăр, ку вăхăтра йапаласене сутăн илмен, кашни

улпутăн хăйĕн именинђе мĕн кирлине цĕтĕмпех туса пынă. Çавăнпа мĕн пурри çуккине пĕлсе, майласа, хатĕрлесе пырасси çăмăл ĕçех пулман. Ку ĕçе туса пынипе улпут майри ђылай çўлĕ вырăнта шутланнă, анђах ăна улпуђĕпе тан пулнă тесе калама пулмасť. Лешĕ хăй унтан кунтан çаратса пурлăх пухнине пуринђен хакла хунă, хĕрарăм ĕçĕ унтан шутласан вак пулнă.

Хулари пурнăçа пăхсан—унта та упăшкисемпе, тăванĕсемпе ĕçе хутшăнакан хĕрарăмсем пур. Вĕсем нумай ăсталăхсенђе арçынпа тан ĕçлеççĕ, ăсталăхпа пĕрлешше тăракан цехсене те кĕреççĕ. Çавăнпа вĕсем хулари ĕçсене тунă ђух та арçынпа пĕрле хутшăннă, хăйсем ĕçлесе тупнă укçасене те алра тытнă. Çапах та вĕсен ирĕкĕ нумайах пулман. Арăмĕ упăшкипе ĕçлекенсен упăшки вилсен, ĕçĕ арăмне куçман, унăн помошникне лекнĕ. Хĕрарăмсем ĕçре арçынпа тан пулсан та, саккун умĕнђе унпа танлашайман, мĕншĕн тесен, çав вăхăтрах упăшки тупăшĕ çинђе пурăнакан хĕрарăм тата ытларах пулнă.

Халăхăн пурнăçĕ ĕмĕр ĕмĕрех пĕр майлă пыманнине ђылай куртăмăр епĕр. Çавăн

пекех ҫак феоталлӑ пурнӑҫ майӗ те ҫӗн йӗрке умӗнҫе сирӗлмелле пулнӑ, ун вырӑнне кӑпитал (капитализм) йӗрки ҫӗмӗрсе ҫитнӗ. Ку йӗркере пуйанлӑха тӳрех ӗҫлеттерсе те, ҫаратса та туман, мӗн пур услам суту-илӳ ӗҫӗнҫен килнӗ. Ӗлӗк феотал хӑйне валли кирлине хӑй хреҫҫенӗсене тутарса пурӑннӑ. Ҫак вӑхӑтра пуйанлӑха хӑй аллинҫе тытакансем таварсене тара тытса ӗҫлеттернӗ. Ку ӗҫлеттерес йӗрке те улшӑнса пынӑ.

Кӑпиталисӑм пуҫланнӑ вӑхӑт ҫухӑн халӑхшӑн пит хӗн вӑхӑт пулнӑ. Кив пурнӑҫ йӗрки ҫӗмӗрӗлнипе тем ҫухлӗ ӑста ҫука йулнӑ. Феоталсем пуҫланакан кӑпитал йӗркине парӑнашшӑн мар пулса, ҫӗн йӗркен пуҫлӑхӗпе, пуршуаҫипе, тем ҫухлӗ краштан вӑрҫи (пӗр патшалӑхри халӑх хушшинҫи вӑрҫӑ) туса ирттерӗ. Ҫавӑнпа ыйткалакансем, килсӗр унта кунта сӗтӗрӗнсе ҫӳрекенсем тем ҫухлӗ те пулнӑ. Ӗҫ шыракан етемӗн шуҫӗ те пулман. Пуринҫен ытла хӗрарӑмсене йӑвӑр килнӗ. Нимсӗр йулнӑ ӑста арӑмӗ, налук тӳллеймесӗр тарнӑ хреҫҫен арӑмӗ, вӑрҫӑра вилнисен арӑмӗ, вӗсен аҫипӑҫисем—пурин те хӑйсен вӑйӗпе тӑранса пурӑнмалла пулнӑ.

Нумайӗшӗ хырӑм выҫҫипе хӑйсене хӑйсем сутма пуҫланӑ, теприсем тем ҫухлӗ йӳн хака та пулин тарҫа кӗме тӑрӑшнӑ. Киле илсе ӗҫлеме май пур ҫухне (кустарничество) ҫӗр ӗҫлесе, налук тӳлleme ҫитерейменнипе хресҫен хӗрарӑмӗсем те темҫул кӗрӗшсе ӗҫленӗ. Кайарахпа, хуҫасем пӗр ҫӗре пухса ӗҫлеттернӗ ҫух та (мануфактура), хӗрарӑмсем тем ҫул йӳн хакпа кӗрӗшсе ӗҫленӗ. Ҫав вӑхӑтран пуҫласа ку таранҫенех хапрӑк савӑтсенҫе ӗҫлекенсен хушшинҫе хӗрарӑм пит нумай пулнӑ. Саккун хута кӗменнипе хӗрарӑм ӗҫӗ хакӗ пӗр майах арҫыннинҫен кайа пулнӑ.

Ҫапла ӗнтӗ тахҫантанпах тем ҫухлӗ хӗрарӑм патшалӑха усӑллӑ, тупӑш паракан ӗҫре ӗҫлеҫҫӗ, анҫах ҫакӑн пирки вӗсен пурнӑҫӗ аванланнӑ-ши? Ҫук, аванланма мар, ку вӑхӑтра хӗрарӑм калама ҫук виҫ тӗрлӗ пусмӑрлӑх тӳсет: вӑл саккун умӗнҫе арҫынпа тан тӑмасть, ҫемйере арҫын ирӗкӗнҫе, ун пусмӑрлӑхне тӳссе тӑрать, кӗрӗшсе ӗҫлеттерекен хуҫи темҫул йӳн хакпа йавӑр ӗҫлеттерсе вӑйне илет. Мӗншӗн апла ши? Кӑпиталисӑм йӗркинҫе етеме кирлӗ йапала ӗҫлесе тӑваканӗсем ҫысра тӑмаҫҫӗ, вӗсене ӗҫлеттерсе пуйан-

лăх пухакансем çеç ҫапла çын пулса тăраççĕ. Ку тĕлĕшрен ĕçлекен хĕрарăмпа арçынăн пурнăçĕ пĕрех. Вĕсен иккĕшĕн те пĕр пулса хăйсен тарĕпе пулнă ĕçрен усă куракан пуршуйсене тĕртсе йарса, ĕçлекенсен патшалăхĕ-комунисăм тума тăрăшас пулаї. Вăл йĕркере арçынĕ хĕрарăмĕпех хăйсемшĕн вăй çитнĕ таран ĕçлĕç. Комунисăмла йĕрке пулсан тин, арçынпа хĕрарăм, алран ал тытса çĕнĕ пурăнăçа çĕнтерсе илнĕскерсем, пĕр тан пулĕç.

---

## Куљук аппа.

Хĕрарăм пухăвĕ Куљук аппана хулари конферентсине суйларĕ.

— Есĕ кай, Куљук аппа, есĕ кай! Есĕ —тăнлă пуçлă хĕрарăм. Лайăхрах пĕлсе кил унтан: налуксем çинђен, тата ытти йал ĕçĕсем çинђен калаçмалла! теççĕ—Арçынсенђен йĕркине тупаймастпăр епир; епир, хĕрарăмсем,—вĕсемшĕн пур те ухмах. Хамăршăн, хамăр тĕттĕм кĕтесрен тухма тăрăшас пулаť.

Куљук аппа патнĕ пĕђĕк ывăлĕ Петĕр пыђĕ те, кĕпи аркинђен туртса: Анне, аťа киле, атте ђĕнет сана, хăй ўсĕр таврăнђĕ, терĕ.

— Хăвăр куратăр, манăн кайма май килменнине, йепле пăрахса кайасха çакă пĕђĕк ађана. Çитменнине тата манăн упăшка питĕ хайар; епĕ хулана кайассине пĕлсен, çĕмĕрме пуçлĕ, тет Куљук.

Пăраски пуху варрине тухрĕ те, икĕ аллине пилĕкне тытса хытă сасăпа калаť: хăçанђен вĕсене пăхăнса пурăнмалла? хăçан-

ҫен вӗсен патаккине ҫимелле? Мӗн ирӗклӗх ку? ӗмӗр арӑмсене выҫӑхран кайарах шутлаҫҫӗ! Аҫапӑҫа ҫуратса, выҫӑх-ҫӗрлӗх пӑхса, упӑшкасене йепле те пулин йурасҫӗ тесе тӑрӑшнипех ӗмӗр иртсе кайаҭ. Хут, ҫыру йӗркине пӗлместпӗр, ҫут тӗнҫе курайманстпӑр, пӗр пӑхӑнса кӑна пурӑн, тет.

— Куҫук аппа, кайсам, хӗрарӑмсен те хӑйсен пуҫӗпе пурӑнма пуҫлас пулаҭ, йӗркене кӗрха, теҫҫӗ.

Ырӑ, уйар кун пуҫланҫӗ. Хӗвел хирсем ҫине хӗртсе пӑхаҭ. Ҫӗртен ҫумӑр хыҫҫӑн ытла та ырӑ шӑршӑ кӗрет. Йӑвӑҫ-курӑксем йӑшах карӗҫ, ҫӳлте тӑри хӑй йуррипе савӑнтараҭ. Пирӗн Куҫук аппа, ҫемҫе ҫулпа, ҫӑмӑллӑн утса пыраҭ. Лашисем хирте сухара, ҫавӑнпа вӑл ҫурранах утаҭ. Анҫах унӑн пиҫӗ урипе утма нимех те мар. Савӑнаҭ те, пирӗн Куҫук аппа, шикленет те:

— Нимӗн пӗлменскерсем епир, сӑмаххуна та йӗркеллӗ калаймӑн.

— Ҫапах та, темле, савӑнӑҫлӑ туйӑнаҭ; пасара каймастӑп ӗҫке. хамӑр хӗрарӑмсен ӗҫӗпе кайатӑп тесе шухӑшласа пыраҭ Куҫук аппа.

Акă хула та курăна пуçларĕ, пахӡисем йешĕрсе лараççĕ, ӡеӡекĕсем симĕсĕн кăвакăн курăнаççĕ. Хули пысăках мар та, анӡах йалтан авантарах. Хула хĕрĕсем хирĕç пулаççĕ, шурă кĕпесемпе, хитрескерсем. Хăйсем, кулкаласа, васкаса, таçта утаççĕ. Пирĕн Куӡук аппа икĕ хĕр патне пыӡĕ те: Ăçта-ши кунта хĕрарăмсен пухăвĕ? тесе ыйтрĕ.

Лешсем ăшшăн кулса пирĕнпе пĕрле пыр, кунтан инçе мар, епир хулари телекатсем, çавăнта кайатпăр, терĕç.

Пирĕн Куӡук аппан ула-ӡăла çи пуçне, шурă тутрине тинкерсе пăхрĕç те, пĕрин савăннипе куççўллисем тухрĕç.

— Ытла та лайăх хĕрсемĕçке, пăхсан Куӡук аппан ӡун савăнаҭ.

Пĕр хĕрĕ: йепле лайăх халĕ, епир сирĕнпе пĕрле пĕр ĕçшĕн кĕрешме кайатпăр, терĕ. Хĕрлĕ йалавсем, ылттăн тĕслĕ сас паллисемпе çырнăскерсем тăраççĕ. Пирĕн Куӡук аппа çыру таврашне вулама пĕлмест, анӡах вăл çакăнта ырă сăмахсем çырнине сисет. Пухура хĕрарăмсем кăна, йалтан килнисем те, хуларан пынисем те пĕрлех вăрăм тенкелсем çинӡе лараççĕ. Шурă тутăрсемпе, çи-

пуҫсем таса, пур те хавасланса пӑхса ларас-ҫӗ. Ҫӳлӗ вырӑнта хӗрлӗ ҫиттипе витнӗ сӗтел ларать. Сӗтелли хыҫӑнҫе пӗр йака ҫамрӑк хӗрарӑм тӑрать, хӗрарӑм пайӗнҫи пуҫлӑх теҫ-ҫӗ. Вӑл хытӑ сасӑпа пуху пуҫланҫӗ терӗ те, мусӑккӑ инттернатсионал кала пуҫларӗ, пу-хури ҫынсем пур те ура ҫине тӑрса, мусӑк сассипе пӗрле йурла пуҫларӗҫ. Кулҫук аппа ку сӑвва йалта та илткеленӗ анҫах йалта кун пек лайӑхах йурлаймаҫҫӗ, кунта ытла та ҫӗ-ренех пырса перӗнет. Такӑш пӗри унӑн ҫӗ-рине кӑларса илсе, ырӑ сӑмахсем каласа, сик-тере пуҫланӑ пек. Вӑл хӑйне-хӑй астумасть, савӑнӑҫлӑ пирки, куҫҫуллисем, сисмен хут-ранах, тумлаҫҫӗ. Кутӑн ҫавӑрӑнса пӑхрӗ те, ытти хӗрарӑмсем те макӑрнинӗ курҫӗ.

— Ех, епир ухмахсем, нимӗн те пӗлместпӗр, шухӑшлама та намӑс, тет вӑл. Унҫен те пулмарӗ, унта хӗрарӑмсенҫен, Кулҫук аппана та, ҫӗнсе сӗтел хушшине ларма хушрӗҫ. Кулҫук аппа кунта пӗтӗмпех вӑтанса хӗрелсе кайрӗ. Кусем ултӑшӗ те сӗтӗл хушшине лар-ҫӗҫ. Вара, леш ҫамрӑк хӗрарӑм (пуҫлӑх текенни), тӑҫӗ те, хытӑ сасӑпа калама пуҫларӗ. Унӑн пур сӑмахӗсем те ҫӗре варринех кӗр-

кӑмӑлӗсем ҫемҫелҫӗҫ пулмалла. Айван тӗт се кайаҫ. Йулашкинҫен хӗрарӑмсене пуҫтарӑннӑшӑн тав турӗ те, хӗрарамсене пурӑнма аван пултӑр тесен: хут вӗренмелле, вара пур те пӗрле ӗҫлесе ҫӗнӗ пурӑнӑҫ тума пуҫламалла, терӗ.

— Ҫынсем пур те пӗр тан, ҫавӑнпа саккун та пуриншӗн те пӗр пулмалла, терӗ. Хӗрарӑмсем савӑннипе алӑсем ҫупрӗҫ. Унтан Уӗҫтӑвком претҫетаттӗлӗ тухрӗ. Вӑл хрансуссем ҫинҫен, акӑлҫансем ҫинҫен, тата пуршуйсем ҫинҫен кала пуҫларӗ. Пур те сахал вӗсене, пур ҫӗртре те тӑвӑр вӗсене. Раҫҫейпе кӳршӗлли, питех кӑмӑла килмен. Хреҫҫенпе ӗҫлекенсем малта тӑни вӗсен халӑхӗсемшӗн аван йапалах мар. Ҫавӑнпа вӗсем пирӗнпе вӑрҫӑ тапратасшӑн. Анҫах пирӗн вӑрҫасшӑн мар, айӑпсӑр йун тӑкасшӑн мар, пуринпе те тӳрӗ пурӑнса, саланса пӗтнӗ пурӑнӑҫа тӳрлӗтесшӗн, тет. Тата вӑл, пирӗн вырӑссен телекагне Лотӑнра вӗлерни ҫинҫен каларӗ. Йепле вӑл, пӗр айӑпсӑрскер, хреҫҫенсемпе ӗҫлекенсене ирӗке кӑларас тесе, 30 ҫул ҫапӑҫнӑ, тет. Вӑл вӗсем патне тӳрӗлӗхпе калаҫма кайнӑ, лешсем кӑна вӑрттӑн пӑшалпа пӗрсе вӗлернӗ. Хӗрарамсем пуҫӗсене лӑшах йаҫӗҫ,

тӗм пуҫӗсемпе шутласа илеймесессӗн те, ҫӗрисемпе сисеҫҫӗ. Пур те вӑрҫа хирӗҫ, пӗри те вӑрҫӑ майлӑ мар. Вӑрҫӑ—вӑйӑ мар, унтан Куҫук аппа та хӑраҫ. Ҫакӑ сӑмахсене илтсессӗн, унӑн ҫӗри сике пуҫларӗ. Унтан ораттӑр каласа пӗтерҫӗ те, пурне те ура ҫине тӑма хушрӗ. Вара мусыккӑ, хуллен хуллен вилнӗ телеката асӑнса похоронный марш йурласа йаҫӗ. Мусыккӑ сасси, таҫта пӗри питӗ хуйхӑрса, ӗсӗклесе йӗнӗ пекех туйӑнҫӗ.

Куҫук аппан сывлӑшӗ питӗрӗнсе, пырне темӗскер капланса ларҫӗ те, унӑн йалти пек макӑрас килҫӗ: Ех мӗскӗн, мӗнҫул пӗтеҫҫӗ сирӗн пеккисем айӑпсӑр? Куҫук аппан кӑмӑлӗ ҫемҫелҫӗ. Мусыккӑ калани, ыталаса, макӑрса кама та пулин ӗмӗрлӗхе пытарнӑ пек туйӑнса карӗ.

Куҫук аппан куҫӗ хуралса карӗ. Унӑн куҫӗ умӗнҫе шурӑ тутӑрсем, хӗрлӗ йалавсем ирте ирте кайнӑ пек туйӑнса карӗ, касса йанӑ йӑвӑҫ пек, вӑл урайне пӗрсе анҫӗ. Пур те шартах сикрӗҫ. Ҫӑтӑмлӑ Куҫук аппа, етем хуйӑхне ҫӑтаймарӗ. Айван пуҫӗпе вӑл, ӗҫлекен халӑха йепле хирӗҫ тӑнине, малашне мӗнле ҫапӑҫу пулассине тӑнласа илҫӗ.

Ҫыллай тăрсан, Кулҫук аппана тăн кĕҫĕ, пиҫĕ тăрăх куҫ ҫӳлли йухнă, ыйхă тĕлĕшпе налуксем ҫинҫен, ҫирсем ҫинҫен калани ăна тĕлĕкри пек кăна туйăнҫĕ. Пуху хыҫҫăн пур те пĕрле сăнсене ӳкерттерҫĕҫ. Пур хĕрарăм телекатсене ӳкерҫĕҫ те «Хреҫҫен хĕрарăмĕ» йатлă, пĕрер кĕнеке паҫĕҫ. Унтан апат ҫиме кайрĕҫ.

Хĕвел те ҫӳлтех мар. Пĕлĕт хĕп хĕрлĕ йăрăм йăрăм тĕттĕмрех. Куҫ умĕнҫен хĕрлĕ йалавсем каймаҫҫĕ. Хытă утаҭ килелле Кулҫук аппа. Анҫах кил шухăшĕ унăн пуҫĕнҫе пĕртте ҫук. Пĕҫĕк аҫине те, сумасăр йулнă ĕнине те аса илмест. Унăн ҫĕрине ĕмĕт, шăтса тухса, тĕреклĕ тымар йаҫĕ, малалли шанҫăк ҫĕрĕлҫĕ.

— Мĕскĕн хĕрарăмсене те манмаҫҫĕ иккен, пирĕшĕн те тăрăшаҫҫĕ, пирĕн пĕтвĕ пурăнăҫ ҫинҫен те аса илеҫҫĕ. Анҫах хут вĕренесҫĕ, тет вăл.

Калама ҫук савăннă, пирĕн Кулҫук аппа, кĕнеке панăшăн. Унăн куҫне пĕлĕт те хĕп-хĕрлĕ пек туйăнса пынă.

# У ҫ у н а.

## I.

Ҫӗрле.

Ҫингиккат, хытнӑ ашӑк айне ӳпне вырт-нӑ та, хӑрах урине йӑшӑлтатгтарса темӗскер шухӑшласа выртать. Сӑмсипе шӑхӑрса илет те, каллех лӑпланать. Уҫуна сӗтел хушшинҫе хаҫат вуласа ларать. Тулта йӗпе йур ҫӑвать. Ҫӳреҫерен пӑхсан кантӑк ҫумне ҫыпӑҫ-нӑ йурсем турраӑн кӳрӑнса ҫылайах шиклен-тереҫҫӗ. Пӗҫӗкҫеҫ лампӑ сӗтел ҫинҫе ҫунса ларать; карташӗнҫе йытӑ уласа вӗрет. Уҫуна хаҫат ҫине тем пек тӑрӑнса пӑхса ларать. Ҫамкисем тарласа кайнӑ, хаҫат ҫинҫи хыпар-сене вуласан, ҫурӑмӗ вӗрилене вӗрилене ка-йать. Вуласа пӗлнӗ сӑмахсене вӑл пуҫӗнҫе тыт-са тӑрать, ӑшӗнҫе йӑвӑррӑн туйӑнать. Хаҫат вуланипе хӑй савӑнать те, шикленет те. Вӑрт-тӑн Ҫинтиккат йенелле пӑхса илет, теттӗм кӗтесселле ҫалӑшнӑ кӑмаки ҫинелле пӑхать

те, шухăша кайат̆. Çыварма та вăхăт çитнĕ, иккĕмĕш хут автан авăтат̆, анђах Улђуна, сыхса лартнă пек, ларат̆: пиђĕсем хĕрелсе кайнă, тутисем хăй тĕлĕнех кулаççĕ. Унтан пусне ђиксе каллех вулама тытăнат̆.

Акă Çинтиккат тăра пуçларĕ. Йăваланса выртса сухалĕ айккинелле ђалăшнă, çӳçĕсем куршанкă йĕпписем пек тăркаланса кайнă. Унăн йывăр уттипе урай хăми лăтăртатса тăрат̆. Вăл сĕтел хушшине Улђунапа хирĕç кĕрсе ларђĕ те, çанçурăмне хытнă аллисемпе хыçса: ну? тет.

Пӳртре лăпкă.

Кăмака хыçĕнђе шăрђăк ђăрăклатат̆. Тулта йĕпе йур çăват̆.

— Ђас пăрахатна есĕ ку шуйтан хутне? тет. Улђуна пĕр сăмах та ђĕнмест, хăрах аллипе хаçатне хупăрласа, ашшĕ çинелле йăлăнса пăхат̆. Ашшĕ ун патнерех пырса хаçатне ђĕрсе илсе, аллисемпе ђăмăртарĕ те, шурă куçне кăларса, пĕр сиктермесĕр хĕрĕ çине хыпса йарас пек пăха пуçларĕ.

— Хăçан та пулсан итлетне есĕ,—йе итлеместне? тет.

— Сана шели мĕн епĕ вулани? тет Улђуна.

Çинтиккат пĕр сăмах та ҫӗнмест. Пуçĕ арман ҫулĕ пек çаврăнаҭ. Çинтикката мĕн хĕрхенмелле. Çынсем, ăна хĕрхенме мар, унтан мăшкăласа кулаççĕ, çавăнпа ăна Çин та икат тесе хушамат панă. Мĕншĕн ăна çапла ҫĕннине никам та пĕлмест. Çинтиккат хĕрне икĕ хулпуççинҫен йарса илҫĕ те, çиленнипе, тĕртсе йаҫĕ.

— Çывăрма вырт,... таçтап тупаççĕ кирлĕ мар йапалапа такçанҫен аппа ıанса ларма?!..

— Сана мĕн ĕç, урам тăрăх ҫупни марха ку!

— Есĕ мана вĕҫĕлтеттеретĕн, санăн майлăрах упăшка шырас пулаҭ, есĕ кунта тем пĕленçи пек, хут вулама кĕрĕшнĕ. Кам хут вулама пĕлекенскере, каҫҫа илет сана, мана та намăса кўртĕтĕн, ху та ĕçлейместĕн!... терĕ.

Хĕллехи çĕрĕн, вĕçĕ хĕрри те çук.

Пĕтĕм йал çывăраҭ. Çинтиккат та çывăраҭ. Тулта тĕттĕм çĕре çўлтен уйăх çутатаҭ. Пирĕн çамрăк хĕраҫа Уҫуна çеç çывăрмасҭ. Хаçат çинҫен хăй тăнласа илеймен сăмахсене астуса тăрса ҫĕре варне хураҭ. Çак сăмахсене шухăшласа вăл çĕрĕ çĕрĕпех çывăраймасҭ.

II.

Ирхине тӑрсан, Ҫинтиккат апат хушшинҗе Улюнана:

— Каҗҗа тыттарса йарамха епӗ сана, тек кирлӗ мар йапалапа аппаланатӑн, есӗ терӗ.

— Епӗ кайапи-ха? тет Улюна.

— Ирӗксӗр парсассӑн, кайӑн, тет ашшӗ хӗрӗ ҫине куҫне җарса пӑхса.

Улюна та пуҫне йӑлтах ҫӗклерӗ:

— Манӑн кайас килмест пулсан? тет вӑл. Нумайҗҗен хӗрӗпе ашшӗ пӗр пӗрин ҫине пӑхса тӑраҫҫӗ. Ҫинтиккат йепле те пулин хӗрне парӑнтарасшӑн, анҗах Улюна ашшӗ умӗнҗе, пӗр сикмесӗр, шикленмесӗр, тӑрат.

Хӑй ӑшӗнҗе: каймастӑп та каймастӑп, тесе шухӑшлат.

Акӑ Ҫинтиккат җӑтаймасӑр хӗрне парӑнҗӗ: җашӑкри симӗс шӳрпе ҫине лӑҗ сурат те, сӗтеле алӑ җӑмӑрккипе шаккат. Унтан шӳрпеллӗ җашӑка ҫӗре ӳкере парат. Ним тӑвайман йенне, кӑнтӑрла тӗлӗнҗе, таҫтан пӗр уксах салтак йертсе килет те, унпала ӳпкеленсе калаҫма тытӑнат:

— Ашшĕне те пăхăнмаççĕ хаљхи саманара, пĕри те çын вырăнне те хисеплемеç çĕ пирĕн йышшисене.

Екерте есĕ манăн хĕре тытқалама пултаратăн пулсан, кађђа илха çавна, мана кунсерен унпа çапăçмалла ан пултăр. Епĕ хам тăлăх çын, çулсем те ват йенелле сулăнаççĕ... тет.

Салтак килĕшсех те кайаҭ.

Вăл, çўллĕскер, куçĕсем сурăх куçĕ пек тулалла тухса тăраççĕ, сулахай йенђи сăмси шăтăкне çурса пăрахнă.

Калаçнă ђух, сасси хăрăлтатса тухаҭ, хăй уксах ури çине пăхса илмессерен:

— Кăна лайăхрах астуса тăрас пулаҭ!. тет.

Сĕтел çинђе салтак илсе килнĕ путылкăпа ерех лараҭ, çапла Çинтиккат Уљунан ирĕклĕхне сутса ĕçет. Виççĕмĕш куркине ĕçсе йарсан, пуçа пыђĕ пулмалла та, Çинтиккат салтакпа алă çапса, хытă сассипе:

— Лайăх ђăмăрта ăна! тет.

Çак сĕре Уљуна киле те таврăнмарĕ.

Пушă пўртĕнђе Çинтиккат пĕђђенех, кăмака çине, Уљуна халиђђен сывăракан вырăна, пăхкалаҭ, тулта ура сасси илтĕнессе

кӗтет. Ҫурҫӗр те ҫитет, тултан ђӳређерен шурӑ йур кӑна курӑнаť, ним сасӑ ђӗвӗ те илтӗнмест. Ҫӳлтен хура пӗлӗтсем хушшинђен уйӑх ҫутти йал ҫине ӳкет. Ҫинтиккат хӑй вырӑнӗ ҫинђен тӑрса урайӗнђе ҫарауран пӗр ђӗнмесӗр шухӑша кайса тӑраť. Унтан типсе кайнӑ карланкинђен ӳсӗрсе каларкаласа уткаласа ҫӳрет.

— Ай ҫаптармалла ҫав! кӗпи аркине тавӑрса купарђинђен ђӗнӗ пиҫиххипе ӗнтмелле!.. тет.

Ҫапла шухӑшлана ђух, ӑна Улђуна авкаланаť пек, ҫаптарнӑ вырӑнсенђе Улђунанӑн ӳђӗ йунӑха йунӑха кайнӑ пек туйӑнаť. Унтан, ашшӗне аллисенђен йарса илсе, Улђуна хытӑ сассипе: Атте ан ҫап! Атте урӑх апла тумӑп!.. тет пек.

Унтан лӑпланса каллех вырӑн ҫине кайса вырта ť те, турӑ ӑна ҫак ҫылӑхсемшӗн ан айӑплатӑр тесе, сӑмаххисене аташтаркаласа, кӗлӗсем вулама хӑтланаť.

„Ей турра ҫуратнӑ хӗре“ вуласа тухаť, унтан. „Ей ҫӳђти аттемӗре“ вулама тытӑнаť те, унӑн ӑшне урӑх шухӑш килсе кӗрет; тахӑш пӗри ӑна вӑрттӑн:

— Мĕнщĕн авланмастăн-ха есĕ? тет пек пўртре шăпах.

Кăмака çинҫен кушак мĕлки сиксе анса, хуллен вырăн патнелле пыраҭ. Çинтиккат йывăрланнă кўç хупаххисене уçма хăтланаҭ, анҫах кусем уçăлмаççĕ.

Кушак мĕљки таçта кайса кĕҫĕ.

Акă Çинтиккат вырăнĕ патне пĕр шурă кĕпеллĕ хĕрарăм мĕлки пырса тăнă та, ăна ăшшăн:

— Мĕншĕн авланмастăнха есĕ? тет.

— Мĕншĕн?

— Епĕ сана шўрпе пĕçерсе парăп.

— Тата мĕн тăвăн?

— Епĕ санăн ăшҫиккўне пусарăп... хĕрўпе пĕрле есĕ нийепле те пурăнса ирттерес çук, вăл сана пăхăнмасҭ пулсан, хăваласа кăларса йар та, мана каҫҫа ил.

— Манпа çывăрăна вара?

— Санпа çыврăп! тет арăм.

— Апла пулсан халех вырт! тет. Çинтиккат çтена çумнерех шуса.

Акă хĕрарăм мĕлки куç умĕнҫен çухалҫĕ. Вырăн çинҫе халиҫҫен курман хура кайăк, хура куçлăскер, вăрăм аванҫăк сăмси-

пе Ҫинтиккат ҫамкинђен сӑхса ларат̆. Вӑл хайар сассипе кӑшкӑрса йарат̆ те, тӑрса ларса, хӗрес хыват̆. Тултан шурӑ йурӑ кӑна курӑнат̆. Ҫинтиккат хӑлхинђе пуҫӗ йанӑрани ҫеҫ илтӗнет.

Ҫур ҫӗр те йӗрипенех иртсе кайат̆.

Ҫӳлте пӗлӗт ҫинђен ҫӑлтӑрсем йарӑна йарӑна анаҫҫӗ.

Ҫинтиккат вырӑн ҫинђе йывӑррӑн сывласа ларат̆.

III.

Уԓуна тул ҫутӑлас уммӗн кӑна тавӑрӑнђӗ.

Картишӗнђе, тӗттӗм сарайран кикирик-кине тӑм илнӗ автан авӑтнӑ сасӑ илтӗнет, ђӑххисем ҫунађӗсене лӑпӑстаттараҫҫӗ. Лупас айӗнђе ӗни мӑшлатса тӑрат̆, тислӗк купи айӗнђен сысна хӑртлатни илтӗнет, хӳме ҫумӗнђе, йур купи тӑрринђе вӑрӑм ҫӑмлӑ выҫӑ йытти, анакан уйӑх ҫинелле пӑхса, хурлӑхлӑ уласа вӗрет.

Уԓуна йыттине хуса йађӗ те, сарайне кайса килсе, ӗни патӗнђе пӑртак тӑђӗ.

— Мӗншӗн килтӗм-ха епӗ? тет Унтан ҫелнӗх алӑкне тӗртсе пӑхрӗ те, пӑртак ђа-

рӑнса тӑђӗ, ашшӗ тухни мӗн туйӑнмаст̆. Вара алӑк умӗнђи ђӳређерен шаккаса пӑхсан Ҫинтиккат йывӑр утти илтӗнсе кайрӗ.

— Кам шуйттанӗ унта?

— Епӗ, аттӗ, уҫха!

— Кам есӗ?

— Епӗ, Уљуна.

— Епӗ сана палламастӑп, терӗ Ҫинтиккат—Ӑҫтан килнӗ, ҫавӑнтах кай...

Уйӑх ҫуттинелле пӑхса каллех выҫӑ йытӑ йур купи тӑрринђе уласа вӗрсе тӑнӑ. Ҫинтиккат тӗркаланса кайнӑ ҫӳҫӗ-пуҫӗпе алӑк урлӑ пӑхрӗ те, унган тула тухрӗ. Унӑн мӗлки шурӑ йур ҫине темиҫе хуҫкаланђӑклӑ пулса ӳкрӗ. Вӑл пиҫиххисӗр, кӗпе вӗҫҫӗн, кивӗ ҫӑм ђӑлха вӗҫҫӗн, пӗр куҫ сиктермесӗр калинке айӗнђе тӑракан Уљуна ҫине пӑхса тӑрат̆.

— Ӑҫта кайас тетӗн?

— Ху кўртмесгӗн те!

Ҫинтиккат ҫамкине сулах‿й аллипе шӑлса илђӗ те, пусма тытнӑ вӑкӑр пек, пуҫне усса, пӗр ђӗнмесӗр пӳрте кӗрсе кайрӗ.

Пӳртумӗ алӑкӗ уҫах йулђӗ. Шухӑшласа тӑрсан тӑрсан, Уљуна та кӗђӗ.

Вӑл ӑйӑха кайсаннах, Ҫинтиккат вырӑн ҫинҫен тӑрса, йерипе урайне анҫӗ те, хӑрах аллипе вырӑн пуҫӗнҫен тӗренсе, тепӗр аллипе Улҫуна пуҫне хыпашласа тупса, ҫӳҫӗнҫен йаваласа илҫӗ. Улҫуна сиксе тӑҫӗ. Унӑн пуҫӗ ҫӳҫӗнҫен йарса илнӗ пирки, авкалана авкалана тӑнӑ, куҫӗнҫен вут тухса карӗ. Ҫинтиккат пӗр ҫӗнмесӗр хӗрхенсе мӗн хӗнемен, Улҫуна пӗтӗм вӑйӗпе ним ҫӗнмесӗр ашшӗ алливҫен ҫӑлӑнса тарма хӑтланать. Ҫилли тулса ҫитсен, вӑл Ҫинтикката:

— Шуйттан есӗ! тесе, кашкӑрса йаҫӗ.

Ҫинтиккат шӑлтӑрах кайрӗ.

Унӑн алли Улҫуна ҫӳҫне пӗр ывӑҫ ҫӑлса кӑларса йӑваласа тӑнӑ ҫӗртенех лӑшах карӗ, пӗтӗм ӳҫӗ ывӑнса кайнӑ пек туйӑнҫӗ. Вӑл вырӑн ҫинҫе ашӑк айӗнҫе тин тӑна кӗҫӗ те, нийепле те хӑй хӗраҫипе мӗн пулнине тӑнласа илеймест. Ҫак сӑмаха хӗраҫи каларӗши, елле ахалҫ ҫавӑн пек илтӗнҫӗши. Хӗненӗши вӑл хӗрне, хӗнеменши.

Ҫӳреҫерен кӑвак ҫут килни курӑнать. Сӗтел кӗтессисем, тенкел пуҫӗсем, ҫтена ҫумӗнҫи ҫакӑнса тӑракан ҫӗлӗк, кӑмака ҫумӗнҫи витре, тата ытти йапаласем те курӑна

пуçларĕç. Тараккансем те, ирре сиссе, çĕрлехи ухатаран таврăнса, маҫҫа çурăкĕсенелле, пĕрене çурăкĕсене пытана пуçларĕç, хăшĕ пĕри маҫҫаран урайне каллех пере пере анаççĕ.

Ытла та хурлăхлă пăхнă çак пўртре ирхи кăвак çутă. Вăл пайан çеç мар, кунсеренех çакăн пек пулнă.

Уљуна кăмака çинҫе шăппăн йĕрсе ларат.

Çинтиккат вырăн çинҫен:

— Ҫас ҫарăнатăна есĕ пайан макăрма, мĕн ман ăша хăпартан? терĕ.

Уљуна ҫĕнмест.

Çинтиккат йывăррăн утса малти кĕтесселле пыҫĕ, унтан ҫылайҫҫен пуçне икĕ пĕç хушшинелле усса ларҫĕ. Ларсан ларсан, йăвашшăнрах:

Епĕ те пĕҫҫенех, мана та хĕрхекен çук, терĕ.

IV.

Уљуна çирĕм икĕ çулта пулнă.

Унпа пĕр тантăшсем каҫҫа кайса аҫапăҫаллă та пулнă. Хăшĕн тата упăшкисем йе вăрçăра вилнĕ, йе револютси вăхăтĕнҫе пĕтнĕ, тăлăха йулма та ĕлкĕрнĕ. Пирĕн Уљу-

на телейсĕр хĕр, ватă хĕрсем шутне кĕрсе урăх шухăшпа пурăннă. Унăн тангăшĕсем аҫа амăшĕсем, аҫапăҫа нумай туса халран кайнăскерсем, каçхине аҫисемпе шараçланса асапланса выртнă. Вăл кĕнекесем вуласа каçхине çĕрĕ çĕрĕпе хăйĕн йывăр пурăнăçĕ çинҫен шухăшласа ларнă Каҫҫа кайнипе те мĕн хаваслăх пур? Унăн вилнĕ амăшĕ те ашшĕ ҫас ҫасах хĕненипе тарăхса йĕреҫҫĕ, хĕрарăм йывăр пурăнăçĕнҫен тарăхаҫҫĕ, ăна та, каҫҫа кайсан, çавнашкаллах пулас пек туйăнат, унăн вăл пурăнăça курас килмест. Хулари ораттăрсенҫен те вăл йалти арăмсен мĕскĕн пурăнăçĕ çинҫен пĕрре çеç илтмен. Мĕн аҫаран асапланса, тĕттĕмлĕхре, хурлăхра пурăнаççĕ, çавăнпа вĕсен пурăнăç-не улăштармалла тенине те илтнĕ. Нумайҫ-ҫен вăл хĕрарăмсен йĕркесĕр пурăнăçĕ çин-ҫен шухăшланă, çавăнпа çак пурăнăçран, тĕттĕм ҫўреҫесĕр пўрте хупасран хăранă пек, хăранă; çак пурăнăça лекĕн те, кайалла ту-хаймăн та. Çĕнĕ пурăнăç тума пĕҫҫен вăй çитмест,—мĕн пĕлет вăл?

Ăна çамрăк урçасем, уксах салтаксем атăнах пыраççĕ, анҫах никĕшне кайсан та,

ырă пурăнăç пулассăн туйăнмаст̆. Кađđăсем ăна хитрешĕн, çывăрма лайăх тесе пăхнă, çамрăк вăйлă лаша çине пăхнă пек, кунĕ кунĕпе ĕçлĕ тесе, илесшĕн пулнă. Çапах та ăна упăшки кунсеренех, ытти арçынсем пекех патак айĕнđен кăлармĕ. Анđах темĕн đул хĕнесен те, вăл мĕншĕн кулđаннине пĕри те ыйтмĕ.

Çавăнпа Улđуна хăтана пыракансене пĕрне те кайма уйламан. Çинтиккат вăрçнă, çилли тулса аллипе сĕтелле шакканă, Улđуна вулакан хаçатсене, кĕнекесене çура çура пăрахнă, đас đасах çапăçнă. Çавăнпа Улđуна, ашшĕне пăрахса, хулана çĕнĕ пурăнăçа йепле тавассине вĕренме кайма та уйлат̆, анđах вată ашшĕне пĕđđен пăрахса хăварма шел пек пулнă. Хулана çитсе лекессинđен те хăранă.

Мĕнле çын ăна шанđăклă вырăн тупма пулăшĕ? Йалта ўснĕскер мĕн пĕлет вăл? Урай çума, урай шăлма, кĕпе çума, шўрпе пĕçерме пĕлет, урăх тата мĕн пĕлет вăл? Тухса кайсан та, каллах çак пурăнăçах таврăнмалла пулмĕши? Çак пўртех кĕмелле пулмĕши? Çапла шухăшланă çемĕн, унăн đĕри тата

ытларах ыратнӑ. Ҫакӑ ҫын аллинҗи пурӑнӑҫра пурӑнас килмест, йепле те пулсан, малалла кайас килет.

Вулӗҫтӑвком ҫыруҫӗ Иван Микули Мускавран хӑй илекен хаҫат, кӗнекесене Улҗунана вулама панӑ, тата сӑмахпа та пулӑшнӑ. Ҫавӑнпа ӑна Улҗуна ырӑ ҫын выръпне хисепленӗ, ыралӑх тӑвасшӑн пулӗ тесе шутланӑ; анҗах вӑл пӑртак йӑнӑшнӑ иккен. Пӗрре вулӗҫтӑвком пӳртӗнҗе пӗр ҫын та йулман. Ҫыруҫӑ алӑка ҫаклатрӗ те, пӑртак уткаласа ҫӳресен, Улҗуна ҫумне пырса ларҗӗ.

— Ҫапла еппин! Вӗренес теппӗри-ха? Улҗуна, вӑл мӗн шухӑшланине сисмесӗр, ҫак ҫыруҫа хӗрарӑмсен пурӑнӑҫӗ йепле йывӑр, вӗсене йепле ҫын выръпне те хисеплӗмеҫҫӗ, тата йепле вӑл хӑй каҗҗа кайас шухӑша пӑрахса, вӗренме шухӑш тытнӑ, ҫакна пурне те каласа кӑтартма пуҫларӗ.

Ҫыруҫӑ ҫакӑ хитре, ҫигӗннӗ хӗр ҫине пӑхкаласа калат:

— Җӑнах ан кай каҗҗа. Епӗ авланнӑ ҫын пулсан та, арӑмпа уйӑралма шутлатӑп-ха, тет.

— Мӗншӗн тата?—тет Улҗуна.

— Пĕр арăмпа пурăнса йăлăхтарат! Хаљ çĕн саксун, акă есĕ те мана питĕ кăмăла килетĕн... тет лешĕ.

Çапла калат те, сыруçă Уљунана мăйĕнђен ыталаса илсе, вырăн çине тĕртсе ўкере пуçларĕ.

— Ђарăн, есĕ мĕн хытланатăн? тесе кăшкăрса йађĕ Уљуна.

— Ара арăмпа уйăрлатăп терĕмçке сана, ђăнах уйăрлатăп! тет сыруçă шăппăнрах.

Çыруçă, кулкаласа, ăна ђуптума хăтланнине курсан, Уљунан калама çук çилли тулса карĕ те, пĕтĕм тарласа кайнă çыруçа тĕртсе йарса, унăн умне сиксе тăђĕ:

— Татах тапăнатăна мана? терĕ.

Çенлĕхе тухсан, ăна претçетатлĕ лăпсăркка мушик тĕл пулђĕ те: тăр, ђупкăн, ăçта кайан? кампа ларнă есĕ? тет.

— Микула пиђђе, йарха! кайăр ман патăмран! терĕ Уљуна. Микула пиђђĕш каллах ăна аллинђен йарса илет те:

— Епĕ ес ăçта пулнине пĕлетĕп... Асту, пурне те каласа кăтартам ак тет. Уљуна аран çăлăнса урама тухса карĕ.

Киле таварăнсан, çĕрĕпе шухăшласа выртат.

— Ытла та йывӑрҫке пирӗн хӗрарӑм пурӑнӑҫӗ: пур арҫын та пусмӑрлама тӑрӑшаҭ. Вара кайран куласшӑн анҭах, тет. Анҭах Улҩуна хӑйне пусмӑрлама памӗ. Ҫӗр касаҭҭен ик-виҫ хут вӑранса тӑрса ларса, уйӑх ҫутти ҫине пӑхса хӑй ӑшӗнҭе:

— Тем тусан та, парӑнмӑп!.. тет.

V.

Ирхине ирех вӗсем патне уксах салтак Улҩунана каҭҭа илес текенни килҭӗ. Улҩуна ҭаланта кӑмака умӗнҭе кӑшӑртатса, уксах салтак мӗншӗн килнине пӗлмӗш пӗк пулса, ҭас тухман. Ӗҫрен пушансан, тухрӗ те:

— Михаҩа, есӗ ман пата ахалех ҫӳрен, епӗ сана каҭҭа пымастӑп! тет.

— Мӗншӗн? тет лешӗ.

— Мӗншӗн тесен, есӗ мана кӑмӑла килместӗн тет Улҩуна.

— Пырап!—тет Ҫингиккат—ахаҩ пӑркаланаҭ вӑл... тет.

— Ҫук, каймастӑп!—тет Улҩуна.

Салтак ҫиленсе кайрӗ.

— Ман ерех укҫи ахалехи? Кам тӳлет уншӑн? тет.

— Сирӗн ерехе епӗ ӗҫмен, тет Улҫуна.

— Ҫаванпа манӑн ӗҫ те ҫук. Есӗр аттепе ӗҫнӗ те, аттепе татӑлӑр... тет Улҫуна. Ҫинтиккат ури ҫине сиксе тӑрҫӗ те, хӗрӗ ҫине усал куҫӗсемпе шӑтарас пек пӑхат.

— Есӗ мана каллех намӑслантарасшӑни? Камран кулатӑн? тет. Улҫуна та ашшӗне хирӗҫ пӑхса тӑрат: вӑл ашшӗ пекех тӳрменскер пулнӑ. Ашшӗ, ун ҫине пӑхса, тӗрлӗ сӑмахсем каласа кӑшкӑрнӑ ҫух, вӑл ун ҫине, икӗ аллине хире хирӗҫ тытса, йӑваш лӑпкӑ хӗр пек, пӗр сӑмах ҫӗнмесӗр тӑнӑ. Унтан сасартӑк хӑйуланса хыттӑн ҫапла каларӗ:

— Есӗ, атте, мана ан ирӗксӗрле, есӗ те, Михалҫа, ан шан: епӗ сана каҫҫа пымастӑп. Мӗн савӑнӑҫ мана сана каҫҫа пыма? Аҫапӑҫа ҫуратма и? Сана аҫашлама-и? Тӗттӗмлӗхре хамӑр пӗгни ҫитмест, аҫасене те ҫавӑнта ҫикес-и? Питӗ тав тӑватӑп сана! Аҫисене тӑвиҫҫен малтан, пӑхма вӗренес пулатха, уҳмах пирӗнсӗр пуҫне те нумай. Хӗрарӑм пурӑнӑҫне курсан, манӑн ҫӗре ыратат! Тага тав тӑватӑп сана, ҫакӑн пек ҫыс тунӑшӑн... терӗ.

Унтан Улӡуна аштёпе Михаӡана, аслă типёре çылăхран ўкённё ӡух тайăлнă пек, тайăлӡё те, пёр çаврăнса пăхмасăр, пўртрен тухса кайрё.

Михаӡа Çинтиккатран:

— Мёскер пулё ку капла? тет. Çинтиккат шăппăнрах: ӡуп хыçёнӡен, тухса тыт, каларăмёçке епё сана, халхи саманара аптён ирёк мар тесе, ӡăнахах та çапла... тет.

— Ерех укçине мёнле тумалла?

— Ăна пёрле çурмаран ёçнё.

— Çук апла мар!—терё те, йăвăç урипе тăрăс тапса: Пирён ун пек тумаççё. Мён манăн пуçа çаврат вăл, епё çынсенӡен мёнрен наӡар? терё.

Çапла вёсем иккёшё ӡылайӡӡен тавлашса ларӡёç. Çак вăхăтра Улӡуна урам тăрăх çапла шухăшласа пырат:

— Ех, мёскён пуçăм! Капла пурăнса пулмаст, арăмсене вăратас пулат; епё пёӡӡен нимён те тăвайман, пурăнасса та кун пек пурăнас килмест манăн.. тет.

Каçхине Мăкăш Праски патёнӡе пуху пулнă: хёрлё çарта вилнё салтак арăмёсем, упăшкаллă арăмсем пур те хăйсен йăвăр пу-

рӑнаҫӗсем ҫине ӳпкелешсе макӑраҫҫӗ. Темиҫе султанпа ӡӑтса пурӑннӑ йӑвӑрлӑха каланипе ӑнласа илмелле мар хурлӑха аҫа илӡӗҫ те, хӗрарӑм йывӑр пурӑнаҫӗ хура пӗлӗт пек капланса тӑӡӗ: ашшӗсем хӗрӗсене ҫӳп татӑккишӗн пӑртакках хыпса йамаҫҫӗ, каӡӡа кайсан, упӑшкасем ҫунтараҫҫӗ, тӑлӑха йулсан, пӗтӗм арҫын пусмӑрлать. Ҫитменнине ӡуханӡсен хутне кӗрес комиссарсем те пӗр пек мар. Хут ҫинӡе комуниссем тесе шутланаҫҫӗ, вӑрттӑн ҫӗрте самоконкине те тиркемеҫҫӗ, куӡӡенеҫсем илеҫҫӗ. Ҫапла хӗрарӑмсен хутне кӗрекен ҫын та ҫук. Вӗсене ӡӑнлӑх ҫула кӑтартса йаракан та ҫук. Ех, мӗскӗнсем! Ахӑр лайӑх комуниссем те пулӗ те ҫав, анӡах таҫтаха вӗсем! теҫҫӗ.

Уӈупа пухура ӡылайӡӡен пӗр ӡӗнмесӗр итлесе тӑӡӗ. Ӑна пухура пур тесе те шутламан.

Унтан пуху варрине тухрӗ те, куҫӗсене ӡарса пӑрахса, пӑртак шухӑшласа тӑӡӗ те, ҫапла каларӗ:

— Арӑмсем, йарӑр-ха есир мана, унӑн йӗркине шырама! Сире упӑшкӑрсем йамӗҫ, пӗӡӗк аӡӑрсене те пӑрахса кайаймӑр, епӗ

пӗҫҫен, ман хыҫран ҫупакан ҫук. Ҫитменни-не есир ҫыру тавраш те пӗлместӗр, епӗ ҫа-пах пӑртак ӑнланатӑп, хутран хутран кирлӗ тӗлте хам та калӑп. Ҫавӑнпа мана йама ху-шатӑп. Ҫитӗ пире кунҫул куҫҫул тӑкни! Авӑ хаҫатсем ҫинҫе йепле хӑш йалсенҫе хӗрарӑм-сем хӑйсем пурӑнӑҫне тӳрлетеҫҫӗ тесе ҫы-раҫҫӗ.

Хаљ хӗрарӑм пайӗсем пур; пӗр пӗрне пулӑшакан комиттетсем суйлаҫҫӗ. Пӗр пӗ-рин хутне кӗреҫҫӗ, пирӗн мӗн туса ларас? Анҫах хӑрама кирлӗ мар, хаљ ӗлӗкхи сама-на мар, уратник, кагак килет тесси ҫук. Екерте аслӑраххисем пирӗн ыйтӑва итлесшӗн пулмасан, епир вӗсене те мӗн тумаллине пӗ-лӗпӗр.

— Ӑҫта кайа пӗлӗнши есӗ, аҫам? терӗ Каур Аљтукӗ.

— Епӗ ӑҫта каймаллине пӗлетӗп! терӗ Уљуна.—Малтан хӗрарӑм пайне пырӑп, ун-тан вара ӑҫта кайма хушаҫҫӗ.

— Мӗн калас тетӗнха есӗ унта?

— Хаљ мӗн ҫинҫен йумахлатӑр, ҫавӑн ҫинҫен калӑп: пире пурӑнма та ҫук, ҫӗнӗ йӗркене те пӗлместпӗр. Пирӗн претҫетатли

те самоконкăпа кăна аппаланат̆. Павăл Мат̆рунине пуçĕнђен кам пенĕ? кам Прокăхйе Укахвинне йулашки кĕрĕкне сутнă? Пурне те аса илсен, çавăн пек вараланђăклă ĕçсем темĕн ђул! терĕ Улђуна.

Çапла вăл хĕрарăм пухăвĕнђе калама çук паттăр йумахланă, унăн çамрăк сăмахĕсем шанђăклă пулнă.

Хĕрарăмсем шутларĕç шутларĕç те:

— Кай еппин, Улђуна, есĕ, урăх пĕри те кайас çук. Пирĕн мĕскĕн пурăнăçшăн тăрăшсам..., терĕç.

VI.

Çил вĕрет.

Вайлă çил йура шăлса вĕçтерет. Хирĕç пыракан çын питне типĕ сивĕ йурпа хупăрлат̆. Кĕпе аркисене пĕр айкинђен тепĕр айкинелле варкăштарат̆, пилĕк таран тумтирĕ аркине тавра тавра йарат̆. Сивĕпе тутасем хускалайми пулаççĕ. Акă шыранкă патĕнђе Улђуна пĕлекен икĕ çул йуппи: пĕри Тăвайне, тепри Мит̆акана илсе кайат̆. Çав çул йуппинђен пĕђĕк ђукун çул, стантсă патне çитсессĕн тата сакăр çухрăм, сивĕ çиле хирĕç ывăннă урасемпе утмалла

Улҕуна утаҭ. Сивӗпе, кусӗнҕен йухса анакан кус сӳллисем, пиҕӗ синҕе вӗтӗ шӑрса пек шӑна шӑна ларнӑ. Касхипе машшин сине ларӗ те, нумайҕҕен ҕӑтнӑ хӗрарӑм йывӑрлӑхӗсене, нийепле висепе те висме май сукскерсене, хулана илсе кайӗ. Лайӑх, тӳрӗ комуниссене шыраса тупӗ те, вара хӑйӗн хытӑ ҕӗлхи сӑварне савӑркаласа, халиҕҕен каласман сӑмахӗсемпе хӑйсен йывӑр пурӑнӑсӗ синҕен калӗ. Сапла вара ӑна айакран, сивӗ сил тӑман витӗр куссӳллисене йухтарса килнине пур те тӑнласа илӗс. Пур те ӑнланӗс, мӗншӗн тесен, пурне те хӗрарӑм пурӑнасӗ паллӑ. Вӑл сасвӑн синҕен кӑпа калӗ... Ӗнер Йеххӗм арӑмне каллах хӗненӗ. Налукне те хӗрлӗ сар салтакӗпе тӑлӑх маткасем сине йӗркесӗр хунӑ. Тӑлӑхсен тыррисемпе самаконкӑ йухтарса ӗсессӗ те, самрӑк тӑлӑх арӑмсене пусмӑрлассӗ. Ун синҕен калӗ вӑл. Екӗрте арӑмсем сыру пӗлмессӗ пулсассӑн, ӑна та каламасӑр хӑвармӗ. Кам айӑплӑ?.. Хуларисем йепле сыру пӗлменнисене сырӑва вӗрентесси синҕен шутласа паҕҕӑр.

Силпе куссуллисем йухассӗ, сивӗпе тутисем хытса кайассӗ. Улҕуна сапах утаҭ. Хир-

пе пынă ӡух, пĕр йур тĕмескинӡен тĕпĕр йур тĕмески ҫине пысăк ҫăпатипе йара йара пусса, пысăк йĕрсем хăварат̆. Ун хыҫĕнӡенех йĕррисене тăман шăлса пырат̆, ҫил питне ҫапат̆, ҫын ҫӳремен ҫул ҫинӡен тĕрте тĕрте йарат̆, анӡах Улӡуна ҫил-тăмана парăнмаст̆, малаллах утат̆. Темĕнӡул тути ҫăварĕ шăнсассăн та, темĕн ӡул куҫҫулĕсем йухсассăн та, вăл кайалла таварăнас ҫук. Хулари-сем мĕн каланине итлĕ, хăй те калĕ. Ӡĕлхи ҫăварне ҫемҫетсе калаҫман сăмахсем тупса калĕ. Хĕрарăм пурăнăҫне каласа парĕ; тата хăйĕн хăлăхсăр хĕр ирĕкне, йепле вăл йуртăман вигĕр килни ҫинӡен те калĕ.

Тĕттĕм турăшсем умĕнӡе хамăр йывăр пурăнăҫшăн текех пуҫҫапмăпăр...

— Атте?

— Вăл хăрушах мар.

Ҫил те ӡарăнмаст̆. Йур та, малтанхи пекех вĕҫтерсе, пĕр ҫĕртен тепĕр ҫĕре хыва хыва лартат̆. Сивĕ ҫил Улӡуна питне вĕрсе йурпа шăлат̆. Ҫапах та Улӡуна ҫак айакри йыхрава малашне авантарах пуласса шанса, утат̆. Ăна темиҫе ҫĕр хĕрарăм хăйсем хушшинӡен суйласа йаӡĕҫ: Кайха, мĕскĕн, кай-

ха, урӑх пирӗн хушшӑмӑртан пӗри те кайас ҫук, терӗҫ. Вӗҫтер ҫилӗллӗ тӑман шӑлса пытарман йӗрсене. Ана ашшӗ ҫилли те, хӑй хыҫӗнҫе, нимӗн те мар. Пӗр тухнӑ ҫӗре ҫитетех вӑл...

Ытла вӑйлӑ ҫилпе, вӑл хир варринҫе пӗр хура пӑнҫӑ сулланнӑ пек ҫеҫ курӑнаҭ. Ҫинтиккат ҫак вӑхӑтра, урай варринҫе, пусма илсе пынӑ вӑкӑр ҫӗҫӗ айӗнҫе тӑнӑ пек, мӑйне авса пӳне усса тӑнӑ. Ашшӗ ирӗкӗ аҫапӑҫа ҫинҫе ҫук мӗн хаљ, ҫак хӗраҫа та хӑрамасҭ ӗҫке. Мӗншӗн кун пек хӗр ҫуралпӑшни манӑн? Хушаматне те темскерле Ҫин-ти-иккат тесе хунӑ. Хӑваласа ҫитесҫӗ кӑна, аскӑна, йур ҫине тӑсса выртарасҫӗ те, кӗпине уҫса, ҫарамас ҫинҫен, ҫурӑмӗ кӑвакарса кайаҫҫенех ҫаптарасҫӗ. Йепле-ха ӗнтӗ, пӑрахса хӑварнӑ та, тухса тарнӑ. Пӗтӗмпех пӑрахнӑ, нимӗн те кирлӗ мар ӑна. Ҫуман ҫӳлмеккисене, кӑмакине хутман, пӗтӗмпех пӑрахса кайнӑ.

Ҫавӑн пек хӗрпе пурӑнӑҫ пулаҭ-и? Ҫук. Авланмаллах пулӗ... Хаљ хӗрӗх саккӑра кайрӑм, килес ҫул тин хӗрӗх тӑхӑр ҫула кайатӑп. Арӑм мана йашка пӗҫерсе парӗ, ҫи-

пуçăма çĕтĕлсессĕн, сапласа парĕ, арăмпала пурăнăп епĕ. Арăма вара епĕ: ух, шуйтансем! тесе çеç хăратса ларăп. Арăм ман умра пĕр ҫĕнмесĕр тăрĕ. Урăхла май тухмасť-ха!

Луккарин икĕ аҫа—Çинтиккат ăна илмест вăл: Çырла Çеркей арăмĕн те виçĕ аҫа, ăна та илмест: çын аҫипăҫипе асапланни ахалех, йепле те пулсассăн, çамрăкки аҫасăрри тупма тăрăшас пулаť. Аҫапăҫа хăйĕн те пулаť, тем ватă çынах мар Çинтиккат, хĕрĕх саккăрта кăна халĕ вăл. Çапла урай варринҫе, çамки шăнăрĕсене хытарса, Çинтиккат ҫылайҫҫен хытă шухăша кайса тăраť. Унăн çурăмĕсем, урисем ыратаççĕ, пуçĕ кăшăлпа кăшăллана пек ыратаť. Кăмаки çинҫен, кăвак куçĕсемпе, кушакĕ пăхса лараť. Сĕтелли çинҫе пуçтарман ҫашăк тирĕксем. Унăн пўртĕнҫе те пушă пек туйăнаť; усал çил вĕркет, ăшĕ тулса çитнипе çăварĕнҫен усал сăмахсем кăна тухаççĕ, куçĕ вут пек çунаť.

VII.

Хулана Уљуна ирех çитнĕ. Хулара ҫылайĕшĕ тăман. Вăл стансăран тухсассăнах, пĕр урампа йерипе утрĕ. Хулари çуртсене тĕлĕнсе пăхкаласа пыраť. Унтан пĕр çўлĕ

хӳме çумĕнҫе нумай хутсем çыпăçтарса хунине курҫĕ те, çавăнта ҫарăнҫĕ. Вăл, çурăмĕ çинҫи кутамккапах, çак хутсем çине çырнă сăмахсене, хăй ăнланаймасассăн та, ҫылайтҫен вуласа тăҫĕ Темшĕн вăл шикленсе карĕ, кутăн-пуçăн шухăшла пуçларĕ.

— Мĕн тума килтĕм-ха епĕ кунта?

Ăçта каймалла-ши ĕнтĕ халь? Акă, ун патĕнҫенех, пĕр пальтуллă çын ун çине, йалти ула-ҫăла тутăр çыхнăскерне, сиввĕн пăхса иртсе карĕ. Ульуна та ăна хыçăнҫен пăхса йулҫĕ, унтан йерипе малалла утрĕ. Урамра пĕр хапха умне сак çине, хăйĕн саланса кайнă шухăшне пуçтарма, ăшҫиккине лăплантарма ларҫĕ. Çав хапхаран пĕр çĕклемлĕ хĕрарăм тухрĕ. Вăл-Ульуна сак çинҫе ларнине курҫĕ те: Йалтан килнĕи мĕн-ха есĕ? —Йалтан, терĕ Ульуна.

— Есĕ мĕн? йапала шыратна мĕн?

— Çук, урăх ĕçпе епĕ, хĕрарăм пайне.

— Ăçта тетĕн?—хĕрарăм пайне тетĕн? Мĕнле хĕрарăм пайĕ вăл.

— Пĕлместĕни вара есĕ?

Арăм пуçне сулларĕ:

— Хаҫ аҫам ун пек пайсем нумай, ҫăкăрпа тумтир ҫеҫ ҫук. Пайсене туса пĕтернĕ, пĕлсе те ҫитереймĕн. Есĕ, ҫапах, мĕн ĕҫпе унта?

Улҫуна хăй мĕнтĕн килнине каласа паҫĕ. Хай арăм кулса йаҫĕ те, куҫне ҫӳлелле пăхса, урăх сăмахласшăн та мар пек пулса, витрисене ҫăнкăртаттарса хапха умĕнҫен кайрĕ. Улҫуна та сак ҫинҫен тăҫĕ. Ҫак арăмпа тĕл пуни, кунне пĕтĕм ăшҫиккине пăсрĕ. Мĕнле-ха ку капла, тесе ҫул тăрăх шухăшласа пырат, ахăр ку хĕрарăм лайăх пурăнат пуҫ, ытла та пай йĕркине пĕлесшĕн мар. Темиҫе утăм утсан, Улҫуна пĕр арҫына ҫарса: Йулташ ăҫта-ши сирĕн хĕрарăм пайĕ? терĕ.

— Хĕрарăм пайĕ хĕрарăмсенҫе, терĕ леш мăшкăласа кулкаласа.

Улҫуна унăн мăшкăлне тавҫăрса илеймесĕр: йепле ха, патне те пымалла мар кусене! тесе шухăшларĕ Ҫапла вăл ҫылайҫҫен ҫавăрăнкаласа ҫӳрерĕ, иртсе кайакансенҫен ыйтат, ҫӳреҫесенҫен пăхкаласа ҫӳрет, кăтартса йаманшăн, унăн ҫилли те киле пуҫларĕ. Ҫак вăхăтра ăна хирĕҫ пĕр ҫамрăкрах аҫа, сăран

тумтирлĕскер, така тирĕ ҫĕлĕкпе, хулхушшине такмак хĕстернĕ, ҫăмăллăн вĕтĕ уттипе пыраҫ. Темле ҫак ҫын Улҕунана кăмăла килсе, вăл ыттисенҕен хĕрарăм пайĕ ҫинҕен ытларах пĕлнĕ пек туйăнҕĕ. Улҕуна ăна ҕарса: Каласам мана, хĕрарăм пайне ăҫтан каймалла? терĕ.

— Унта кайасси, йулташ, нимĕн те мар! терĕ хытăрах сасăпа ҫак ҫын.—Епĕ халҕ унта кайатăп, манпа пĕрле пырайăйăр, терĕ.

— Есĕ мĕнле ĕҫпе? Ҕылай пулати килни? Пĕҕҕенех килтĕни? Ни йепле те тупаймарăна? Тĕлĕнмелле ҫав! тет.

Ҫак ҫыннăн хытă уҫă сас пулнă, хăй сулланарах утнă. Вăл хăвăрт калаҫнă. Улҕунаран пĕр май ыйтса пынă, Улҕуна аран ун хыҫĕнҕен ĕлкĕрсе пынă. Вĕсем пĕр икĕ хутлă ҕул ҫурт патне ҫитсессĕн: Акă сана хĕрарăм пайĕ! Аҫа кӳртсех йарамҫке, кунта каллах аташса ҫӳрĕн, терĕ.

Ҫӳлелле картлашкапа хăпарҕĕҫ, вăрăм ҫелнĕхпе пыҕĕҫ те, Улҕунана йертсе пыраканни, пĕр пӳлĕм алăкне уҫса, хытă сасăпа:

— Марйе йулташ, акă йалтан теппутат килнĕ, ху патна кӳрҫ-ха. Ҫынави йул-

таш çуки мĕн? Хăçан килет вăл? терĕ. Уҫуна Марйе çине вăтанкаласа пăхнă. Марйе сарă, хĕрлĕ çарти салтаксен кĕпи йышши кĕпепе, пысăк сĕтел хушшинҫе ларнă. Унăн кĕске, хура çӳçĕсем шăрт пек тăратса тăнă, хура куçĕсем ыррăн пăхса, çынна çивĕҫлетсе йарас пек, пăхнă. Хăй вăл çинçерех хытканскер пулнă. Вăл, Уҫунана ăшшăн: Лар ман çуммалла, калаçăпăр... терĕ.—Мĕнле йалха есĕ? Ҫасах Марйе Уҫунан кăмăлне килҫĕ. Вăл хăйĕн ăшă сăмаххисемпе унăн ҫĕрине çемçетрĕ. Вара Уҫуна, хăй ăшăнҫе мĕн шухăшласа килнине пĕтĕмпех каласа паҫĕ; вĕсен йалĕнҫи хĕрарăмсен хĕн пурăнăçĕ çинҫен, хĕрлĕ çарта вилнĕ салтак арăмĕсене пулăшу ныçтан килменнине те. пĕтĕмпех каласа паҫĕ. Налуксене те тӳрлĕхпе хумаççĕ; халҫ арçынпа хĕрарăм пĕр танах тесе, пуринҫен те пĕр пекех илмелле теççĕ. Пĕри пĕри самакунка ĕçтерсессĕн—унăнне ҫакараççĕ, ĕçтерменнине тыткалаççĕ вара. Тăлăх арăмсем темĕн ҫухлĕ йĕреççĕ, хăйсем хут пĕлменскерсем нимĕн те тума пĕлмеççĕ, пухăва мĕне кайсассăн, сирĕн ĕç çук кунта тесе, арçынсем вăрçайса пăрахаççĕ. Çавăнпа та епĕ,

пӑртак та пулин пулӑшу пулмӗпи тесе килтӗм. Пӗрин те авалхи йӗркепе пурӑнас килмест, ҫӗннинҗен ҫакланма хӗнӗ терӗ.

Марйе Улҗунана сӑмаххисене каласса пӗтериҗҗенех, пӗр пӳлмесӗр, итлесе ларҗӗ. Ҫак вӑхӑтрах Ҫынави йулташ та пырса ҫитрӗ. Вӑл Улҗуна арки ҫинҗи кутамккана курсассӑнах, йалтан килнӗ хӗрарӑм иккенне пӗлҗӗ. Вӑл йерипе айӑккарах кайса ларҗӗ те, сӗнкех пулса карӗ. Шутсем шутласа ҫырса Ҫынави ҫӗрӗпе ҫывӑрман иккен. Унӑн пиҗӗ те ывӑннӑ пек пулнӑ, вӑл хутран хутран куҫне уҫсассӑн, Улҗунапа Марйе ӑна тӗтре пек ҫеҫ кураннӑ. Марйе Улҗунана итлесе пӗтерсессӗн, Ҫынави ҫинелле пӑхса: Ҫакӑ йулташ, йалтан килнӗскер, пиртен пулӑшу ыйтат, терӗ.

Ҫынави пуҫне сулласа илҗӗ те, тӑрса уткаласа ҫӳресен ҫӳресен, сӗтел умне җарӑнса тӑҗӗ те.

Мӗн йапала? терӗ.

Марйе Улҗупа сӑмаххисене Ҫынавийе кӗскен каласа паҗӗ.

Ҫынави вара Улҗунаран: ҫамрӑксенӗн союсӗн йаҗейкки пури, ҫукп? Хӗрарӑм конхверентсисем пулаҫҫи? Кам та пулсан „Хреҫ-

ҫен хӗрарӑмӗ“ йатлӑ шурнал илети? тесе ыйта пуҫланӑ.

Пӗр ыйтӑвӗ тепӗринҫен йӑвӑртарах пулнӑ, Улҫуна аран-аран тавҫӑрса илсе каласа пынӑ. „Хресҫен хӗрарӑмӗ“ йатлӑ шурнал ҫинҫен ҫеҫ лайӑх астунӑ. Ӑна пӗрре вулӗҫтӑвком претҫетаттӗлӗ Н. Иванҫӑ хуларан илсе килнӗҫҫӗ. Улҫуна ӑна пуҫламӑшӗнҫен пуҫласа тепӗр хӗрне ҫитиҫҫенех, опйавлленисене те хӑвармасӑр, вуласа тухнӑҫҫӗ. Ҫынави вара, вулӑсри орканисаттӑрпа Тениссӑва ҫӗнсе илсе, ҫакӑн ҫинҫен калаҫса кӑтартрӗ те, ҫавӑнтах, ҫитес вырсарни кун, Улҫунасен йалне пырса, хӗрарӑм пуху туса, вулӑсри хӗрарӑм пухуне телекаткӑ суйлама, Сносҫенко йулташа хушрӗ. Улҫуна кӳршӗри хӗрарӑмсене пухӑва тухма калама хушрӗ.

Улҫуна ҫывӑрма Ҫынави патне йулҫӗ. Ҫывӑрасси Улҫуна ҫывӑрман, анҫах ҫывӑрмасассӑн та, лайӑх тӗлӗксем курнӑ пек туйӑннӑ, малтан пӗлмен хулана килсе кӗнӗ ҫухне ӑна хӑрушӑн туйӑнаҫҫӗ, халӗ Марйепе Ҫынавине хӑй хуйхине каласа парсассӑн ӑна ҫӑмӑллӑнах туйӑнҫӗ.

## VIII.

Акӑ Синтиккат ҫирлерӗ. Урай тӑрӑх йӑвӑррӑн утса ҫӳресе, вӑл витререн сивӗ шыва курки куркипе курман пек ӗҫнӗ, вара вырӑн ҫине кӗрӗк витӗнсе выртнӑ; унтан кӑмака ҫине хӑпарса выртнӑ. Анҫах сивӗ ҫир ӑна пур ҫӗртре те ҫӗтретнӗ. Унӑн ҫӗри Улҫупа ҫине пӗҫӗк пӳрте пушатса хӑварнӑшӑн ҫилленнӗ ҫилпе, вӗресе тӑнӑ. Унӑн кӑмакине те хутас килмен, урама та, кӳрше те тухса ҫӳрес кӑмӑл пулман; ҫапла вӑл сивӗ пӳртре шӑлне шаклаттарса каска пек выртнӑ.

Пилӗк кунтан Улҫуна та таварӗнҫӗ. Хӑйпе пӗрле ҫак сивӗ хутман пӳрте йулташ Сношҫенкӑна илсе кӗҫӗ. Вӑл вӑрӑмскер, ҫӳҫне кастарнӑскер, салтак ҫӗлӗкӗпе, сурӑх тирӗнҫен ҫӗлеттернӗ кӗске кӗрӗкпе, ҫӗн пиҫихи ҫыхнӑ. Синтиккат тӑма хӑтланса кӑшкӑрса йарасшӑнҫӗ, анҫах вӑйӗ ҫитеймерӗ. Улҫуна карташӗнҫен киҫак (навусран тунӑ кирпӗҫ йевӗрлӗ вут вырӑнне хутмалли) илсе кӗҫӗ те кӑмакине хутса йаҫӗ. Урайне шӑлса, ӑна кӑна пуҫтарсан, шыва кайса килсе, сӑмавар лартрӗ. Пӗр ҫур сехетрен, Улҫуна таварӑнни ҫинҫен, тата хӑйпе пӗрле хӗрарӑм

ораттăр илсе килни çинҫен пĕтĕм йала хыпар сарăлнă.

Вырсарни кун пуху пулҫĕ. Икĕ кун Улҫуна килрен киле ҫупса çӳресе хĕрарăмсене хĕрарăм ĕçĕсем çинҫен шутлама ҫĕнсе çӳренĕ.

Çинтиккат пӳртĕнҫе пĕтĕм хĕрарăм сасси. Пĕр хĕрĕхе йахăн пухăннă та, пиҫкери пулăсем пек шапăлтатаççĕ.

Çинтиккат кăмака çинҫе пуçне çĕклесе хур майĕ пек авкаласа хĕрарăмсен шавланине итлесе тĕтреллĕ кăтартакан куçĕсемпе пăхса выртнă.

Акă Снопҫенкă хытă сассипе кала пуçларĕ; вăл пĕтĕм пĕвĕпе хумханса, хутран хутран алли ҫăмăрккипе сĕтел çине шакканă. Çавăнпăн Çинтиккат вăл мĕн çинҫен каланине те тăнланмасăр, хайарланса:

— Авă шуйтансем мĕн хăтланаççĕ!.. Çĕлĕкне арçын пеккинех тăхăнса çӳрет... Хĕрарăм иккенне пĕлмелле те мар...

Снопҫенкă, хулари пухусенҫе темиçе пин халăх умĕнҫе калама вĕреннĕскер, çак пĕҫĕк пӳртре те аслă вырăнсенҫе каланă

пек хытă сассипе, пĕр сехет ытла йанăраттарса тăҫĕ. Вăл хĕрарăмсене хăйсен хушшинҫен телекатсем суйлама хушрĕ. Хĕрарăмсене пĕр пĕрне пулăшакан комиттет, тата йалканашне суйланă ҫух, пĕрикĕ хĕрарăм кĕртме хушрĕ. Екерте ҫапла ĕҫлемесен, вĕсем ĕмĕрне те хăйсен хурлăхлă пурнăҫсенҫен. арҫынсем пусмăрланинҫен хăтăлас ҫук. Ҫаванпа вăл ҫак пухурах хĕрарăмсене хăйсен хушшинҫен, пуринҫен лайăхрах ҫыру пĕлекеннине, хĕрарăмсемпĕн тăрăшакана вулăс телекатсен пуххине суйласа йама хушрĕ.

— Ара, кама суйлăпăр ĕнтĕ, Самуйла Улҫунине суйлас, вăл паттăр пирĕн! теҫҫĕ.

Ҫапла Ҫинтиккат ҫылайҫҫен ҫак хĕрарăмсем ҫине кăмака ҫинҫен пăхса, итлесе выртрĕ. унтан пуҫне тусанлă ашăк ăшне ҫиксе шăлĕсене хытă ҫыртса выртрĕ.

Ашшĕне пăхăнас йĕрке ҫук халҫ, ыттимасăр пĕри те пире ҫын вырăнне хумаҫҫĕ.

Улҫуна, хĕрарăмсем ҫине пăхса савăнса, ăшшăн кулса тăрат.

Ҫапла пуҫланҫĕ ҫĕнĕ пурăнăҫ.

## Ҫаваш Оплӑҫӗнҫи Кӗнеке Кӑларакан Уйрӑмӑн Шупашкарта Аҫапӑҫа Кӗнекисем тухнӑ:

1. Кайӑкҫӑ Йемел—М. Сибиряка.
2. Макар тӗлӗкӗ—Короленко.
3. Кӑвак Мӑй—М. Сибиряка.
   Шӑпҫӑк йурри—Андерсена.
4. Пӗҫӗк паттӑрсем—М. П. Петрова.
   Ҫӳревҫӗ шапа—В. Гаршина
5. Ҫеҫпӗл (3 пайлӑ халлап)
6. Хуйхӑ. Нӑрӑ Ваҫукӗ—А. Чехова.
7. Тӑватӑ кун...—В. Гаршина.
8. Пӗр мушик пӗҫҫел икӗ кӗперала тӑрантарса усрани ҫинҫен—С. Щедрина.
   Ӑслӑ ырашпӗтри—его же.
9. Хӑравҫӑ Паҫҫа. Хула тулашӗнҫе. Тӗттӗмлӗх пӗтерет—А. Чехова.
10. Упа ҫинҫен.
11. Шартлама Сивӗ—Короленко.
12. Ҫаваш йумахӗсем—М. Трубина.
13. Ӗҫкӗ пуҫа ҫирӗ—Семенов.
14. Ҫӗлкаш—М. Горького.
15. Мӗскӗн Антун—Григорович.
16. Ҫӑрсӑр тыха. Тӗплӗ хреҫҫен—А. Семенов.

---

Стребованиями обращаться по адресу: гор. Чебоксары ЧАО. Госиздат.

---

Книжка набрана учениками школы Фабзавуча типографии Чувашгосиздата, под наблюдением метранпажа В. П. Кулькова.